24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
МАРТ
6
КĔÇНЕРНИКУН
54 (5769) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕ

Паян ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ уçăлать. Çак канашлун пĕлтерĕшĕ пысăк. Вăл колхозлă строй иртнĕ çулта тунă чаплă çĕнтерӳсене, унпа пĕрлех ялхуçалăх ĕçĕнчи çитменлĕхсене тĕплĕн тишкерсе тухать, умра тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме конкретлă мероприятисем палăртса хăварать.

Канашлăва колхозлă ялăн чи лайăх çыннисем — колхоз производствинчи стахановецсемпе çĕрĕç новаторĕсем, вăйлă тырпул мастерĕсем, выльăх-чĕрлĕх, сад-пахча ăстаçисем, трактористсемпе комбайнерсем, звеноводсем, бригадирсем, колхоз председателĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем пухăнаççĕ. Çак çынсем колхоз производствине аталантарса пырас тата унăн экономикăллă хăватне, тĕреклĕхне ӳстерсе пырас çĕрте çавтери пуян опытсем пухнă.

Паян уçăлакан канашлура иртнĕ çулта пирĕнпе ăмăртса ĕçленĕ икĕ тăван республикăсенчен килнĕ хăнасем—Мордва тата Мари республикисенчи колхозсенчен килнĕ чи лайăх çынсем пулаççĕ. Çак республикăсемпе ăмăртса ĕçлесси пирĕн республикăри колхозниксен ĕçри йăлине кĕчĕ. Паянхи канашлу вăл—автономлă виçĕ республикăсенчи халăхсен чаплăран та чаплă çĕнтерĕвĕсене, вĕсен никам çĕнтерейми тĕреклĕ туслăхĕпе тăванлăхне, хĕрӳллĕ юратăвне, вĕсем Ленин—Сталин партийĕ тавра, совет правительстви тавра, халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ тавра çирĕппĕн пĕтĕçсе тăнине демонстрацилесе паракан канашлу пулса тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ çак канашлун пĕлтерĕшĕ пит те пысăк.

Колхозлă строй иртнĕ çулта чăннипех те пысăк çĕнтерӳсем турĕ. Тĕштырăсен, техникăллă культурăсен, сад-пахча çимĕçĕсен тухăçлăхĕ, обществăллă выльăх-чĕрлĕх хисепĕ тата продуктивлăхĕ чылаях хăпарчĕ.

Агротехника правилисене тĕрĕс тата вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырса, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсен опычĕпе усă курса пирĕн республика пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Уйрăм районсем тырпул тухăçне ӳстерес тĕлĕшпе правительство панă заданине ытлашшипех тултарнă. Сăмахран, Вăрнар районĕ кашни гектартан 16,2 центнер, Сĕнтĕр районĕ 14,1 центнер, Çĕмĕрлепе Хĕрлĕ Чутай районĕсем 13,8-шер центнер тĕштырă пухса кĕртнĕ.

Колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси те ӳсĕм çулĕ çинче тăрать. Хальхи вăхăтра пирĕн республикăра ĕне, сысна, сурăх фермисем тăватă пин ытла, унсăр пуçне чăх-чĕп фермисем 1352 организациленĕ. Мăйракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 16,2 процент, сыснасен хисепĕ 22,2 процент, сурăхсен хисепĕ 28 процент ӳснĕ.

Сад-пахча çимĕçĕсем ытларах та ытларах туса илесси вăйланса пырать. Иртнĕ çулта пирĕн республикăри колхозсем çĕнĕрен темиçе çĕршер кӳлĕсем, пĕвесем туса шыв хуçалăхне вăйлатрĕç, çĕнĕрен нумай армансем туса лартрĕç, çĕнĕ производствăсем организацилерĕç. Чылай колхозсенче электричество вăйĕпе ĕçлеме пуçларĕç.

Çак çĕнтерӳсем вĕсем социализмлă çĕрĕçĕн пĕтĕмĕшле культури хăпарса пынине, колхозлă строй çирĕпленсе, тĕрекленсе пынине, колхозсен обществăллă хуçалăхĕ пур енчен те хăвăрт аталанса пынине яр-уççăн кăтартса параççĕ. Социализмлă ялта çĕнĕ кадрсем, çĕнĕ çынсем ӳссе çитĕнчĕç. Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, колхозлă стройăн çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерĕвĕсемшĕн пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлекенсем, колхоз производствин чаплă организаторĕсем халĕ ĕнтĕ пĕрерĕн мар, темиçе пиншерĕн шутланаççĕ. Çĕр мĕн пама пултарать, унран çавна пĕтĕмпех илес пулать,—çакăншăн кĕрешет кашни тӳрĕ кăмăллă колхозник.

Колхозниксен политикăллă тата производствăллă хастарлăхĕ, вĕсен культурăлăхĕ ӳснĕçемĕн ӳсет. Стахановла движени—массăллă движени пулса тăчĕ. Çакă вăл иртнĕ çулти чаплă çĕнтерӳсенчен пĕри. Халĕ ĕнтĕ пĕччен стахановецсен паха опычĕсемпе ӳсĕмĕсене чылай звеносемпе бригадăсем, çавăн пекех колхозсем те çĕнсе илме пуçларĕç. Пирĕн республикăра иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни гектартан çĕршер пăт е татах та ытларах тĕштырă туса илнĕ колхозсем 122, бригадăсем 339, звеносем 468 шутланаççĕ. 1940 çулта Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем 816 пулнă пулсан, кăçалхи выставкăна пĕлтĕрхинчен икĕ хута яхăн ытларах—пин сурă кандидат тăратма пултаратпăр. Республикăри Хисеп хăми çине малта пыракан колхозсене, ялхуçалăхĕнче малта пыракансене тăватçĕр ытла кĕртнĕ.

Паллă стахановецсен, çĕрĕç новаторĕсен ĕçĕсемпе пĕтĕм республика мухтанать. Вĕсен хисепĕнче—Сергей Коротков, Рыбаков, Храмов, Михеев, Елахов тата ытти юлташсем. Сăмахран, Кольцовкăри колхоз гектартан 180 пăт тĕштырă пухса кĕртнĕ. Ку колхозра Елизавета Ашанина юлташ звени 234 пăт, Татьяна Пупина юлташ звени 214,8 пăт, Николай Леонтьевпа Николай Оленин бригадисем 200 пăт ытларах тĕштырă туса илнĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри (Çĕрпӳ хули) доярка Анна Цветкова юлташăн пархатарлă ĕçĕсене палăртма тивĕçлĕ. Вăл иртнĕ çулта кашни ĕнерен 2058-шар литр сĕт суса илнĕ, кăçал 3000-шер литр суса илесссишĕн кĕрешет. Е тата Анна Тюрина юлташа (Кувакино р.) илер-ха. Унăн ĕçне Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче кăтартса панă. Анна Тюрина юлташ чухăн çемьере ӳснĕ, 1928 çулччен çырма, вулама пĕлмен, çав çул кăна вăл хутла пĕлменнисене вĕрентекен шкултан вĕренсе тухнă. Халĕ Анна Тюрина юлташ пысăк тухăçлă махорка туса илес ĕçĕн мастерĕ. Вăл агротехникăна пĕлет, ăна пурнăçа кĕртсе пырать, çынсене хăй пек ĕçлеме вĕрентет. Иртнĕ çулта гектартан 63,23-шер центнер пухса кĕртсе, государствăна пысăк сортлă махорка панă.

Социализмлă çĕрĕçĕн стахановецĕсемпе новаторĕсем пирĕн республикăра нумай. Мĕнле çынсем вĕсем? Çавăн пек пысăк çĕнтерӳсене вĕсем ăнсăртран кăна çĕнсе илмеççĕ-и? «Çак çынсем вĕсем, юлташсем,—ахаль çынсемех, вĕсем ĕлĕк вăтам, батрак, чухăн пулнă çемьесенчен тухнă, Сталин юлташ стахановецсем çинчен каланă пек,—вĕсем простой çынсемех, мăнаçлисем те мар, пĕтĕм Союзĕпе чаплă ят илме хапсăнни вĕсен пĕрре те çук. Çак çынсем ӳсен-тăрансен природине практикăра, хăйсен ĕçĕнче вĕреннĕ тата вĕренеççĕ, агротехника наукине вĕреннĕ, çак ĕçе малалла ярса пыраççĕ, ялхуçалăхĕ валли йăлтах çĕнĕ нормăсем тата çĕнĕ положенисем тăваççĕ» (А. Андреев). Çак çынсем колхоз производствинчи мĕнпур ĕçсене пĕтĕм чĕререн юратса тăваççĕ, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ, çавăнпа та вĕсен çĕнтерĕвĕсем çавтери чаплă та пысăк.

Колхозлă хресченсем умĕнче татах та пысăк задачăсем тăраççĕ. Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă тăрăх, тĕштырăсен пĕтĕм продукцийĕ 1941 çулта 8 процент, урăхла каласан, 7 миллиард та 900 миллион пăта çити ӳсмелле. Çакна асăрхамалла, тĕштырăсен продукцийĕ акмалли çĕрĕн лаптăкĕ ӳснĕ шутпа мар, пуринчен ытларах, тырпул тухăçĕ хăпарнă май ӳсмелле.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси те вăйлăн аталанса пымалла. 1941 çулта мăйракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 19 процент, вăл шутра ĕнесен хисепĕ 24—25 процент ӳсмелле, сурăхсемпе качакасен хисепĕ—23—24 процент, сыснасен хисепĕ—38 процент тата лашасен хисепĕ 9—10 процент ӳсмелле.

Паллах, çак аслăран та аслă задачăсене пурнăçа кĕртес тесен колхозниксен хастарлăхне çĕклесе пырас пулать, стахановла движенипе социализмлă ăмăртăва татах та анлăн сарса пырас пулать. Çитменлĕхсем пирĕн сахал мар-ха. Колхоз уйхирĕсенче ĕç хĕрсе пынă вăхăтра хăшпĕр колхозниксем колхоз производствинчен пăрăнаççĕ. Чылай чухне ялхуçалăх машинисемпе туллин усă курмасăр уйхирти ĕçсене вăраха тăсса яраççĕ, çавна пула пысăк çухатусем чăтаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартассишĕн, çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех пăхса ӳстерессишĕн чылай çĕрте большевикла кĕрешмеççĕ. Çак çитменлĕхсем кăçал пачах пулмалла мар.

Вăйлă тырпул туса илес ĕçре пирвайхи утăм вăл—çураки. Анчах ăна ирттерме пирĕн республика хатĕр мар-ха. Çураки валли паха вăрлăхсем хатĕрлесси, уйхире çемçетме тислĕк торф, юшкăн, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, минераллă удобренисем ытларах хатĕрлесси, ялхуçалăх машинисене юсасси, ака валли лашасене хатĕрлесе çитересси—паян тумалли ĕçсем. Çуракине пысăк пахалăхпа кĕске срокра ирттерсен кăна вăйлă тырпул туса илес задачăна ăнăçлăн татса пама пултаратпăр.

Колхозлă стройăн çĕнтерĕвĕсем пысăк. Çав çĕнтерӳсене татах та ытларах пысăклатса пырас тесен, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕсемпе анлăн усă курас пулать, çак çулсенче пирĕн партипе правительство ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртсе пырас пулать. Ку тĕлĕшпе ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ кĕрешӳн программине çирĕплетсе парĕ.

ПĔЛТЕРНИ

1941 çулти мартăн 10-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре, Советсен çуртĕнчи ларусем пулакан залĕнче, партин Шупашкар хула организацинчи активăн пухăвĕ пулать.

КУН ЙĔРКИ:

1. ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конферецийĕн итогĕсем (докладчик ВКП(б) Обкомĕн тата горкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков юлташ).

Актива кĕмелли пропусксене парторганизацисен секретарĕсем ВКП(б) горкомĕн оргинструкторски отделĕнче мартăн 6, 7 тата 8-мĕшĕнче каçхине 7 сехетрен пуçласа 11 сехетчен илеççĕ.

ВКП(б) ШУПАШКАР ГОРКОМĔ.

ССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VIII Сессийĕ

СССР Верховный Совечĕ йышăннă Законсем

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн 1941 çулти Государство бюджечĕ çинчен йышăннă Закон

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ **çапла йышăнать:**

1. СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă ССР Союзĕн 1941 çулти Государство бюджетне Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн Бюджет Комиссийĕсен доклачĕсем тăрăх йышăннă улшăнусемпе çирĕплетес, вăл бюджетра: доходсем пĕтĕмпе — 216.840.224 пин тенкĕ тата расходсем пĕтĕмпе — 216.052.224 пин тенкĕ, доходсем расходсенчен 788 миллион тенкĕ ытларах тата, унсăр пуçне, Союз бюджетĕнчи, республикăсемпе вырăнти бюджетсенчи средствăсен юлашкийĕ 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне СССР Госбанкĕн счечĕсем çине 5.534.960 пин тенкĕ юлать.

2. Çак Законăн пĕррмĕш статьипе килĕштерсе Союз бюджечĕн дохочĕсемпе расхочĕсене çапла çирĕплетес: доходсем тăрăх — 170.480.109 пин тенкĕ тата расходсем тăрăх — 169.692.109 пин тенкĕ, доходсем расходсенчен 788 миллион тенкĕ ытларах тата, кунсăр пуçне, средствăсен юлашкийĕ 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне СССР Госбанкĕн счечĕсем çине 4.844.900 пин тенкĕ юлать.

3. Союзлă республикăсен 1941 çулти государство бюджечĕсене çак суммăсемпе çирĕплетес:

	Доходсем тăрăх (пиншер тенкĕпе)	Расходсем тăрăх (пиншер тенкĕпе)
Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республики	24.959.667	24.959.667
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	14.618.950	5.479.779
вырăнти бюджетсем	10.340.717	19.479.888
Украина Советлă Социализмлă Республики	8.294.539	8.294.539
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	5.566.090	2.163.767
вырăнти бюджетсем	2.728.449	6.130.772
Белорус Советлă Социализмлă Республики	2.134.366	2.134.366
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	1.745.536	700.339
вырăнти бюджетсем	388.830	1.434.027
Азербайджан Советлă Социализмлă Республики	1.050.135	1.050.135
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	831.669	396.911
вырăнти бюджетсем	218.466	658.224
Грузин Советлă Социализмлă Республики	1.233.760	1.233.760
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	1.022.551	491.267
вырăнти бюджетсем	211.209	742.493
Армян Советлă Социализмлă Республики	520.667	520.667
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	557.905	229.191
вырăнти бюджетсем	62.762	291.476
Туркмен Советлă Социализмлă Республики	533.098	533.098
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	471.417	234.774
вырăнти бюджетсем	61.681	298.324
Узбек Советлă Социализмлă Республики	1.612.746	1.612.746
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	1.307.712	693.824
вырăнти бюджетсем	305.034	918.922
Таджик Советлă Социализмлă Республики	589.535	589.535
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	539.543	256.911
вырăнти бюджетсем	49.992	332.624
Казах Советлă Социализмлă Республики	1.725.332	1.725.332
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	1.508.638	656.848
вырăнти бюджетсем	216.694	1.068.484
Киргиз Советлă Социализмлă Республики	477.325	477.325
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	436.287	211.798
вырăнти бюджетсем	41.038	265.527
Карело-Финн Советлă Социализмлă Республики	495.335	495.335
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	466.829	295.168
вырăнти бюджетсем	28.506	200.167
Молдаван Советлă Социализмлă Республики	462.017	462.017
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	412.913	166.248
вырăнти бюджетсем	49.104	295.769
Литва Советлă Социализмлă Республики	835.958	835.958
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	747.718	448.283
вырăнти бюджетсем	88.240	387.675
Латви Советлă Социализмлă Республики	903.365	903.365
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	800.335	539.384
вырăнти бюджетсем	103.030	363.981
Эстони Советлă Социализмлă Республики	532.270	532.270
Вĕсенчен: республика бюджечĕ	476.545	332.608
вырăнти бюджетсем	55.725	199.662
Союзлă республикăсен государство бюджечĕсем тăрăх пĕтĕмпе	46.360.115	46.360.115
Вĕсенчен: республикăсен бюджечĕсем	31.410.638	13.297.100
вырăнти бюджетсем	14.949.477	33.063.015

4. Республикăсемпе вырăнсенчи бюджетсен средствисенчен 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне СССР Госбанкĕн счечĕсем çине юлмалли суммăсене çапла çирĕплетес: РСФСР тăрăх — 372.495 пин тенкĕ, Украина ССР тăрăх — 123.301 пин тенкĕ, Белорус ССР тăрăх—31.649 пин тенкĕ, Азербайджан ССР тăрăх — 15.713 пин тенкĕ, Грузин ССР тăрăх — 18.306 пин тенкĕ, Армян ССР тăрăх — 7.765 пин тенкĕ, Туркмен ССР тăрăх — 7.971 пин тенкĕ, Узбек ССР тăрăх — 24.057 пин тенкĕ, Таджик ССР тăрăх—8.720 пин тенкĕ, Казах ССР тăрăх—25.756 пин тенкĕ, Киргиз ССР тăрăх — 7.144 пин тенкĕ, Карело-Финн ССР тăрăх — 7.394 пин тенкĕ, Молдаван ССР тăрăх — 6.699 пин тенкĕ, Литва ССР тăрăх — 12.020 пин тенкĕ, Латви ССР тăрăх — 13.407 пин тенкĕ тата Эстони ССР тăрăх — 7.663 пин тенкĕ, союзлă республикăсен бюджечĕсем тăрăх пĕтĕмпе — 690.060 пин тенкĕ.

5. Республикăсен бюджечĕсенчен АССР-сен тата вырăнсенчи Советсен бюджечĕсем валли уйăрса панине çак суммăсемпе çирĕплетес:

	(Пиншер тенкĕпе)
Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республики	9.139.171
Украина Советлă Социализмлă Республики	3.402.323
Белорус Советлă Социализмлă Республики	1.045.197
Азербайджан Советлă Социализмлă Республики	434.758
Грузин Советлă Социализмлă Республики	531.284
Армян Советлă Социализмлă Республики	228.714
Туркмен Советлă Социализмлă Республики	236.643
Узбек Советлă Социализмлă Республики	613.888
Таджик Советлă Социализмлă Республики	282.632
Казах Советлă Социализмлă Республики	851.790
Киргиз Советлă Социализмлă Республики	224.489
Карело-Финн Советлă Социализмлă Республики	171.661
Молдаван Советлă Социализмлă Республики	246.665
Литва Советлă Социализмлă Республики	299.435
Латви Советлă Социализмлă Республики	260.951
Эстони Советлă Социализмлă Республики	143.937
Пĕтĕмпе	18.113.538

6. 1941 çулта государствăн пĕтĕм союзлă налогĕсемпе дохочĕсенчен республикăсенчи тата вырăнсенчи бюджетсем валли çакăн пек виçесемпе уйăрса памалла тăвас:

а) халăхран илекен подоходнăй налог тăрăх пухăннă укçа-тенкĕрен РСФСР, Украина ССР, Белорус ССР тата Узбек ССР бюджечĕсем валли — 50 процент тата Азербайджан ССР, Грузин ССР, Армян ССР, Туркмен ССР, Таджик ССР, Казах ССР, Киргиз ССР, Карело-Финн ССР, Молдаван ССР, Литва ССР, Латви ССР тата Эстони ССР бюджечĕсем валли — 100 процент;

б) хуласенче подоходнăй налог хуракан халăхран пурăнмалли çуртйĕр тата культурăпа йăла строительствин нушисем валли пухăннă укçа-тенкĕрен РСФСР, Украина ССР, Белорус ССР, Азербайджан ССР, Грузин ССР, Армян ССР тата Узбек ССР бюджечĕсем валли — 25 процент тата Туркмен ССР, Таджик ССР, Казах ССР, Киргиз ССР, Карело-Финн ССР, Молдаван ССР, Литва ССР, Латви ССР тата Эстони ССР бюджечĕсем валли—100 процент;

в) колхозсенчен илекен подоходнăй налог тата колхозниксемпе единоличниксенчен илекен ялхуçалăх налогĕ тăрăх пухăннă укçа-тенкĕрен РСФСР, Украина ССР, Белорус ССР тата Узбек ССР бюджечĕсем валли 25 процент тата Азербайджан ССР, Грузин ССР, Армян ССР, Туркмен ССР, Таджик ССР, Казах ССР, Киргиз ССР, Карело-Финн ССР, Молдаван ССР, Литва ССР, Латви ССР тата Эстони ССР бюджечĕсем валли — 100 процент;

г) яллă вырăнсенче пурăнмалли çуртйĕр тата культурăпа йăла строительстви валли пухăннă укçа-тенкĕрен мĕнпур союзлă республикăсен бюджечĕсем валли — 100 процент;

д) рабочисемпе служащисем тата хулари ытти халăх хушшинче сарнă государство заемĕн сумминчен — 25 процентне союзлă республикăсен бюджечĕсем валли, вĕсенчен 15 процентне вырăнти бюджетсем валли памалла; колхозниксемпе единоличниксем хушшинче сарнă заем сумминчен — 90 процентне союзлă республикăсен бюджечĕсем валли вырăнти бюджетсене памалла;

е) машинно-тракторнăй станцисен дохочĕсенчен союзлă республикăсен бюджечĕсем валли — 25 процент, вĕсенчен 15 процент таран вырăнти бюджетсене памалла.

7. Оборотран илекен налогран союзлă республикăсем валли уйăрса пама СССР Верховный Совечĕ çирĕплетнĕ суммăсемпе килĕшӳллĕн çав налогран миçе процент уйăрса парассине кашни союзлă республика тăрăх палăртса пама СССР Халăх Комиссарĕсен Советне хушас.

8. ССР Союзĕн 1939 çулти Государство бюджетне пурнăçа кĕртни çинчен тунă отчета çирĕплетес: доходсем тăрăх—156.013.908 пин тенкĕ тата расходсем тăрăх — 153.299.045 пин тенкĕ, доходсем расходсенчен 2.714.863 пин тенкĕ ытларах пулнă.

СССР Верховный Совет Президиумĕн
Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн
Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 1-мĕш.

Пурне те тивĕç çар обязанноçĕ çинчен йышăннă закон çумне 30-а тата 30-б статьясем хушасси çинчен тата 7-мĕшпе 54-мĕш статьясене улăштарасси тата хушусем кĕртесси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ **çапла йышăнать:**

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ «Çар тата тинĕс-çар училищисенчен кăларнă çынсем çар службинче пуласси çинчен» 1940 çулти июлĕн 4-мĕшĕнче, «Пурне те тивĕç çар обязанноçĕ çинчен йышăннă Закона хушусем кĕртесси çинчен» 1940 çулти октябрĕн 4-мĕшĕнче тата «Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн сывлăш-çар вăйĕсен рядовой тата кĕçĕн начальство составĕ действительнăй службăра пулмалли сроксем çинчен» 1940 çулти декабрĕн 25-мĕшĕнче кăларнă Указсене çирĕплетес.

Çакна май «Пурне те тивĕç çар обязанноçĕ çинчен йышăннă Закон» çумне 30-а тата 30-б статьясем хушас тата 7-мĕшпе 54-мĕш статьясене улăштарса хушусем кĕртес, вăл статьясене çакăн пек çырас:

Статья 7. Действительнăй служба срокĕсем çакăн пек пулаççĕ:

а) Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн сухопутнăй чаçĕсен рядовой составĕ валли — икĕ çул;

б) Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн сухопутнăй чаçĕсен кĕçĕн начальство составĕ валли — виçĕ çул;

в) Çарпа флотăн сывлăш-çар вăйĕсен рядовой тата кĕçĕн начальство составĕ валли — тăватă çул;

г) çыранри оборона чаçĕсен рядовой тата кĕçĕн начальство составĕ валли— тăватă çул;

д) Рабочисемпе Хресченсен Тинĕс-Çар Флотĕнчи карапсемпе чаçсен рядовой тата кĕçĕн начальство составĕ валли — пилĕк çул;

е) шалти войскăсен рядовой составĕ валли — икĕ çул;

ж) шалти войскăсен кĕçĕн начальство составĕ валли — виçĕ çул;

з) чикĕри войскăсен сухопутнăй чаçĕсен рядовой тата кĕçĕн начальство составĕ валли — виçĕ çул;

и) чикĕри войскăсен карапĕсем çинчи рядовой тата кĕçĕн начальство составĕ валли — тăватă çул.

Асăрхаттарни: çар тата тинĕс-çар училищисенче вĕренекен курсантсем, вĕсене вĕренӳре япăх ĕлкĕрсе пынăшăн е дисциплинарнăй проступкăсемшĕн училищесенчен кăларса янă хыççăн, Хĕрлĕ Çарăн е Тинĕс-Çар Флочĕн строевой чаçĕсенче действительнăй çар службин срокне служить туса ирттерме тивĕç, ку срока училищера вĕреннĕ вăхăт шута кĕмест.

Статья 30-а. Действительнăй çар службине илнĕ граждансем çар чаçĕсене хăйсен юрăхлă тумтирĕсемпе пыма тивĕçлĕ, хăйсемпе пĕрле вĕсен çаксем пулмалла: аялтан тăхăнмалли пĕр мăшăр кĕпе-йĕм, çиелтен тăхăнмалли пĕр кĕпе е çиелтен тăхăнмалли куртка, пĕр брюки, урана тăхăнмалли (юрăхлă атă е ботинка), ăшă пальто е ватка хурса çĕленĕ куртка, пуçа тăхăнмалли тата хăйсен япалисене хумалли михĕ.

Çар чаçне пырса çитнĕ хыççăн, действительнăй çар службине илнисене палăртса çирĕплетнĕ нормăсем тăрăх казеннăй çар обмундированийĕ параççĕ, призывниксен хăйсен япалисене çар чаçĕсем вĕсем действительнăй службăра пулса ирттерекен пĕтĕм вăхăт хушшинче войсковой складсенче сыхласа усрама илеççĕ.

Статья 30-б. Рядовойсемпе кĕçĕн начальниксен составне çар чаçĕсенчен запаса янă чухне, вĕсен аллинчи çар обмундированине пĕтĕмĕшпех войсковой складсене параççĕ, вĕсене вара хăйсен тумтирне таврăрса параççĕ.

Статья 54. Срочнăй службăри красноармеецсемпе кĕçĕн командирсен çырăвĕсем, çар чаçĕсем янă тăрăх, укçа тӳлемесĕрех çӳреççĕ. Çавăн пекех срочнăй службăри красноармеецсемпе кĕçĕн командирсен адресĕпе вĕсем службăра тăнă вырăна яракан çырусем те тӳлемесĕрех çӳреççĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 1-мĕш.

СССР Халăх Комиссарĕсем пулма уйăрса лартасси çинчен СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ кăларнă Указсене çирĕплетесси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ çак юлташсене СССР Халăх Комиссарĕсем пулма уйăрса лартасси çинчен кăларнă Указсене çирĕплетме **йышăнать:**

СССР Вăтам машиностроени Халăх Комиссарĕ пулма — СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместительне Вячеслав Александрович **Малышева;**

СССР Государство Контролĕн Халăх Комиссарĕ пулма — Лев Захарович **Мехлиса;**

СССР Государство Банкĕн Правлени Председателĕ пулма — СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместительне Николай Александрович **Булганина;**

СССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ пулма — Лаврентий Павлович **Берияна;**

СССР Государство Хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссарĕ пулма — Всеволод Николаевич **Меркулова.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 1-мĕш.

ССР Союзӗн 1мӗш созыври Верховный Совечӗн VIII Сессийӗ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖ ЙЫШӐННӐ ЗАКОНСЕМ

ЯЛХУÇАЛӐХ НАЛОГӖ ÇИНЧЕН 1939 ÇУЛТИ СЕНТЯБРӖН 1-мӗшӗнче КӐЛАРНӐ ЗАКОНӐН 3, 8 ТАТА 19-мӗш СТАТЬИСЕНЕ УЛӐШТАРАССИ ÇИНЧЕН

Ялхуçалӑх налогӗ çинчен 1939 çулти сентябрӗн 1-мӗшӗнче кӑларнӑ Закона çакан пек улӑштарусем кӗртес:

1. 3-мӗш статьяна çапла çырас:

«Статья 3. Ялхуçалӑх çӑлкуçӗсенчен илекен налог хумалли доходсене доходноçӑн çакӑн пек вӑтам нормисем тӑрӑх палӑртаççӗ:

	РСФСР	УССР	БССР	Азербайджан ССР	Грузин ССР	Армян ССР	Туркмен ССР	Узбек ССР	Таджик ССР	Казах ССР	Киргиз ССР	Карело-Финн ССР	Молдаван ССР
Гектартан илекен доходность (тенкӗпе)													
Тӗштырӑпа ытти культурӑсем (аялта каланӑ культурӑсемсӗр пуçне) акнӑ çӗр лаптӑкӗнчен	800	800	800	650	650	650	650	650	650	650	650	650	800
Çӗрулми лартнӑ çӗр лаптӑкӗнчен	2.700	2.800	2.800	2.100	2.100	2.100	2.100	2.100	2.100	2.100	2.100	2.500	2.100
Йӗтӗн-долгунец акнӑ çӗр лаптӑкӗнчен	500	500	500	—	—	—	—	—	—	500	—	500	500
Çӗрмамӑк акнӑ çӗр лаптӑкӗнчен	—	—	—	2.000	—	2.000	1.500	2.000	2.000	1.500	1 500	—	—
Кантӑр акнӑ çӗр лаптӑкӗнчен	750	900	1.000	—	—	—	—	—	—	850	—	750	900
Табак акнӑ çӗр лаптӑкӗнчен	1.700	1.100	—	2.000	2.500	2.500	—	1.700	—	1.400	1.400	—	1.100
Махорка акнӑ çӗр лаптӑкӗнчен	950	1.000	700	—	—	—	—	950	—	700	750	—	1.000
Пахча-картишсенчен, бахчасенчен	4.000	4.000	4.000	4.500	4.500	4.500	4.000	4.500	4.000	4.000	4.500	3.500	4.000
Улма-çырла сачӗсенчен	4.200	4.500	4.200	6.000	6.000	6.000	6.000	6.500	6.000	5.000	5.000	—	5.000
Виноградниксенчен	8.000	6.000	—	8.000	7.500	8.000	6.500	8.000	6.500	6.500	6.500	—	7.000
Улӑх-çаранӗсенчен	300	400	400	400	400	400	300	300	300	300	400	300	400
Продуктивлӑ кашни выльӑхран илекен доходность													
Ӗнерен	1.000	1.000	900	600	600	650	700	700	600	850	850	800	800
Сурӑхран тата качакаран	80	80	80	60	60	60	90	90	90	90	100	80	80
Сыснаран	400	400	400	200	200	200	200	200	200	200	200	350	400
Ӗç выльӑхӗпе хӑйсен хуçалӑхӗнче усӑ курнинчен илекен доходность													
Лашаран, верблюдран, мулран	700	700	700	600	600	600	600	600	600	600	600	600	600
Волран, вӑкӑртан, буйволран	400	400	400	300	300	300	300	300	300	300	300	400	400

2. 8-мӗш статьяна çапла çырас:

«Статья 8. Хӑйсен подсобнӑй хуçалӑхӗнчен: килвырӑнӗ çумӗнчи участок çӗрӗнчен, выльӑх-чӗрлӗхрен тата çӗрӗçпе мар илекен ӗç укçисенчен доходсем илсе тӑракан колхозниксен хуçалӑхӗсенчен ялхуçалӑх налогне хуçалӑхӑн çулталӑкри налог хуракан суммине (5—7 статьясем) ставкӑсен çакӑн пек таблици тӑрӑх шутласа илеççӗ:

Хуçалӑхӑн çулталӑкри налог хумалли доход пысӑкӗшӗ	Хуçалӑх çине хуракан налог пысӑкӗшӗ
700 тенкӗ таран	доходӑн кашни пӗр тенкинчен 8 пус.
700 тенкӗрен 1000 тенке çити	56 тенкӗ тата 700 тенкӗрен иртекен доходӑн кашни тенкинчен 9 пус.
1000 тенкӗрен 2000 тенке çити	83 тенкӗ тата 1000 тенкӗрен иртекен доходӑн кашни тенкинчен 11 пус.
2000 тенкӗрен 3000 тенке çити	193 тенкӗ тата 2000 тенкӗрен иртекен доходӑн кашни тенкинчен 15 пус.
3000 тенкӗрен 4000 тенке çити	343 тенкӗ тата 3000 тенкӗрен иртекен доходӑн кашни тенкинчен 19 пус.
4000 тенкӗрен малалла	533 тенкӗ тата 4000 тенкӗрен иртекен доходӑн кашни тенкинчен 24 пус.

Колхозниксем колхозран ӗçкунӗсем тӑрӑх укçан тата натурӑпа илекен доходсем çине ялхуçалӑх налогӗ хумаççӗ».

3. 19-мӗш статьяна çапла çырас:

«Статья 19. Единоличник хресченсен хуçалӑхӗсенчен ялхуçалӑх налогне çакӑн пек таблицӑпа шутласа илеççӗ:

Хуçалӑхӑн çулталӑкри налог хумалли дохочӗн пысӑкӗшӗ	Хуçалӑх çине хуракан налог пысӑкӗшӗ
700 тенкӗ таран	110 тенкӗ
700 тенкӗрен 1000 тенке çити	110 тенкӗ тата 700 тенкӗрен иртекен доходӑн кашни тенкинчен 18 пус,
1000 тенкӗрен 2000 тенке çити	164 тенкӗ тата 1000 тенкӗрен иртекен доходӑн кашни тенкинчен 22 пус.
2000 тенкӗрен 3000 тенке çити	384 тенкӗ тата 2000 тенкӗрен иртекен доходӑн кашни тенкинчен 30 пус.
3000 тенкӗрен 4000 тенке çити	684 тенкӗ тата 3000 тенкӗрен иртекен доходӑн кашни тенкинчен 38 пус.
400 тенкӗрен 5000 тенке çити;	1064 тенкӗ тата 4000 тенкӗрен иртекен доходӑн кашни тенкинчен 48 пус.
5000 тенкӗрен малалла	1544 тенкӗ тата 5000 тенкӗрен иртекен доходӑн кашни тенкинчен 60 пус».

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартӑн 1-мӗш.

СССР Конституцийӗн (Тӗп Законӗн) 23, 78 тата 83-мӗш статьисене улӑштарасси тата хушусем кӗртесси çинчен йышӑннӑ

ЗАКОН

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совечӗ **çапла йышӑнать:**

1. Аккерман облаçӗн центрне Аккерман хулинчен Измаил хулине куçарнине тата Аккерман облаçӗн ятне улӑштарса Измаил облаçӗ тунине çирӗплетес.

Çакна май СССР Конституцийӗн 23-мӗш статьине çакӑн пек çырас:

«**Статья 23.** Украина Советлӑ Социализмлӑ Республикине çак облаçсем кӗреççӗ: Винница, Волынь, Ворошиловоград, Днепропетровск, Дрогобыч, Житомир, Запорожье, Измаил, Каменец-Подольск, Киев, Кировоград, Львов, Николаев, Одесса, Полтава, Ровно, Сталино, Станислав, Сумы, Тарнополь, Харьков, Чернигов тата Черновицы».

2. СССР Государство Контролӗн союзлӑ-республикӑллӑ Халӑх Комиссариатне тунине тата СССР Шалти Ӗçсен Халӑх Комиссариатне союзлӑ-республикӑллӑ икӗ Халӑх Комиссариатне уйӑрнине: СССР Шалти Ӗçсен Халӑх Комиссариатне; СССР Государство Хӑрушсӑрлӑхӗн Халӑх Комиссариатне уйӑрнине çирӗплетес.

Çакна май СССР Конституцийӗн 78 тата 83-мӗш статьисене çакӑн пек çырас:

«**Статья 78.** Союзлӑ-республикӑллӑ Халӑх Комиссариачӗсен шутне çак Халӑх Комиссариачӗсем кӗреççӗ:
Апат-çимӗç промышленноçӗн;
Пулӑ промышленноçӗн;
Аш-какай тата сӗт промышленноçӗн;
Çӑмӑл промышленноçӑн;
Текстиль промышленноçӗн;
Вӑрман промышленноçӗн;
Çӗрӗçӗн;
Тӗштырӑпа выльӑх-чӗрлӗх совхозӗсен;
Финанссен;
Суту-илӳн;
Шалти Ӗçсен;
Государство Хӑрушсӑрлӑхӗн;
Юстицин;
Сывлӑха сыхлас ӗçӗн;
Строительство материалӗсен промышленноçӗн;
Государство Контролӗн».

«**Статья 83.** Союзлӑ республикӑн Халӑх Комиссарӗсен Советне союзлӑ республикӑн Верховный Совечӗ çаксенчен тӑвать:
Союзлӑ республикӑн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ;
Председатель заместителӗсем;
Государство план комисси председателӗ;
Халӑх Комиссарӗсем:
Апат-çимӗç промышленноçӗн;
Пулӑ промышленноçӗн;
Аш-какай тата сӗт промышленноçӗн;
Çӑмӑл промышленноçӑн;
Текстиль промышленноçӗн;
Вӑрман промышленноçӗн;
Строительство материалӗсен промышленноçӗн;
Çӗрӗçӗн;
Тӗштырӑпа выльӑх-чӗрлӗх совхозӗсен;
Финанссен;
Суту-илӳн;
Шалти Ӗçсен;
Государство Хӑрушсӑрлӑхӗн;
Юстицин;
Сывлӑха сыхлас ӗçӗн;
Государство Контролӗн;
Çутӗçӗн;
Вырӑнти промышленноçӑн;
Коммуналлӑ хуçалӑхӑн;
Социальнӑй обеспеченин;
Автомобиль транспорчӗн;
Искусство ӗçӗсен Управлени Начальникӗ;
Пӗтӗмсоюзлӑ Халӑх Комиссариачӗсен Уполномоченнӑйӗсем».

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартӑн 1-мӗш.

СССР Верховный Совечӗн VII-мӗшпе VIII-мӗш Сессийӗсем хушшинче СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ кӑларнӑ Указсене çирӗплетесси çинчен

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совечӗ СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ кӑларнӑ çак Указсене çирӗплетнӗ:

«Хӗрлӗ Çарпа Тинӗс-Çар Флотӗнче единоначалине тӗреклетесси çинчен» 1940 çулти августӑн 12-мӗшӗнче кӑларнӑ Указа; «Производствӑра вакӑтӗвек çаратусемшӗн тата хулиганла ӗçсемшӗн уголовнӑй йӗркепе ответ тыттарасси çинчен» 1940 çулти августӑн 10-мӗшӗнче кӑларнӑ Указа; «СССР Государствӑн Ӗç вӑйӗсен Резервисем çинчен» 1940 çулти октябрӗн 2-мӗшӗнче кӑларнӑ Указа; «Инженерсене, техниксене, мастерсене, служащисене тата квалификациллӗ рабочисене пӗр предприятисемпе учрежденисенчен теприсене обязательнӑ куçарас йӗрке çинчен» 1940 çулти октябрӗн 19-мӗшӗнче кӑларнӑ Указа; «Оборудованипе материалсене сутма, улӑштарма тата урӑх çӗре пама чарасси çинчен тата çак законсӑр пуçне ӗçсемшӗн суд умӗнче ответ тыттарасси çинчен» 1941 çулти февралӗн 10-мӗшӗнче кӑларнӑ Указа; «Россия Советлӑ Федеративлӑ Социализмлӑ Республикипе Карело-Финн Советлӑ Социализмлӑ Республики хушшинчи чикӗне палӑртса парасси çинчен» 1940 çулти августӑн 8-мӗшӗнче кӑларнӑ Указа; «Украина Советлӑ Социализмлӑ Республикипе Молдаван Советлӑ Социализмлӑ Республики хушшинчи чикӗне палӑртса парасси çинчен» 1940 çулти ноябрӗн 4-мӗшӗнче кӑларнӑ Указа; «Белорус Советлӑ Социализмлӑ Республикипе Литва Советлӑ Социализмлӑ Республики хушшинчи чикӗне палӑртса парасси çинчен» 1940 çулти ноябрӗн 6-мӗшӗнче кӑларнӑ Указа.

СССР Государство Контролӗн Халӑх Комиссарне Л. З. Мехлис юлташа СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председатель Заместителӗ пулма уйӑрса лартасси çинчен СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ кӑларнӑ Указа çирӗплетесси çинчен

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совечӗ **çапла йышӑнать:**

СССР Государство Контролӗн Халӑх Комиссарне Лев Захарович **Мехлис** юлташа СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председатель Заместителӗ пулма çирӗплетес.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартӑн 1-мӗш.

СССР Шалти Ӗçсен Халӑх Комиссарне Л. П. Берия юлташа СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председатель Заместителӗ пулма уйӑрса лартасси çинчен СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ кӑларнӑ Указа çирӗплетесси çинчен

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совечӗ **çапла йышӑнать:**

СССР Шалти Ӗçсен Халӑх Комиссарне Лаврентий Павлович **Берия** юлташа СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председатель Заместителӗ пулма çирӗплетес.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1911 çулти мартӑн 1-мӗш.

Ф. Г. Бровко юлташа СССР Верховный Совет Президиумӗн Председатель Заместителӗ пулма суйласси çинчен

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совечӗ **çапла йышӑнать:**

Федор Григорьевич **Бровко** юлташа СССР Верховный Совет Президиумӗн Председатель Заместителӗ пулма суйлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1911 çулти мартӑн 1-мӗш.

Колхозсенчен доход тӑрӑх налог илесси çинчен йышӑннӑ

ЗАКОН

I сыпӑк

ПӖТӖМӖШЛЕ ПОЛОЖЕНИСЕМ.

Статья 1. Колхозсенчен доход тӑрӑх илекен налога çаксем тӳлеççӗ:

а) ялхуçалӑх артелӗсем, пулӑ тытакан артельсем тата çӗрӗçне пӗрлешсе ӗçлекен юлташлӑхсем;

б) хутӑш промысла-ялхуçалӑх артелӗсем (промколхозсем) тата инвалидсен кооперацин ялхуçалӑх дохочӗсем пур артельсем.

Пулӑ тытнипе — пулӑ тытнӑ продукцине государствӑн заготовителӗсене тата кооперацине панипе илнӗ доходсенчен, промысла кооперацин союзӗсенче тӑракан хутӑш промысла-ялхуçалӑх артелӗсен (промколхозсен) промышленность предприятийӗсен дохочӗсенчен, çавӑн пекех инвалидсен кооперацин союзӗсене кӗрекен артельсен предприятийӗсен дохочӗсенчен те колхозсенчен илекен подоходнӑй налога илмеççӗ, çав доходсем çине тивӗçлӗ законсем тӑрӑх налогсем хураççӗ.

Статья 2. Налога иртнӗ çулталӑкри доход çине, колхозсен çулталӑкри отчечӗсем тӑрӑх, финанс оргӑнӗсем документсене пӑхса тухса тӗрӗслеnӗ хыççӑн палӑртнӑ доход çине, шутласа хураççӗ.

Колхоз правленин кашни çуллене мартӑн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр, иртнӗ çулталӑкшӑн колхоз членӗсен пӗрлехи пухӑвӗ çирӗплетнӗ çулталӑкри отчета — обязательно колхозӑн ревизи комиссийӗ панӑ заключенипе — тивӗçлӗ финанс оргӑнне тӑратмалла.

II сыпӑк

НАЛОГ ХУМАЛЛИ ДОХОДА ПАЛӐРТАССИ

Статья 3. Колхозӑн налог хумалли дохочӗсен хисепне укçан тата натурӑпа илнӗ çак доходсем кӗреççӗ (çак Законӑн 4-мӗш статьинче кӑтартнисемсӗр пуçне):

а) ӳсен-тӑрансем акса тунипе, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетнипе, хурт-хӑмӑр усранипе тата пурçӑн хурчӗсем ӗрчетнипе илнӗ доходсем;

б) колхозсен подсобнӑй предприятийӗсен изделийӗсене сутнипе илнӗ доходсем;

в) ытти майпа кӗнӗ доходсем.

Статья 4. Колхозсен налог хуракан дохочӗсен хисепне çаксене кӗртмеççӗ:

а) обязательнӑй поставкӑсем тӑрӑх государствӑна продуктсем панипе илнӗ суммисене;

б) колхоз фермисенчи выльӑх-чӗрлӗхсене тӑрантарса усрама каякан фуража, çав хисепрех тӗкӗнмелле мар страховой фураж фондне те;

в) МТС ӗçлесе панишӗн тӳлеме кайнӑ продукцие, çавӑн пекех туса панӑ ӗçсемшӗн машинно-тракторнӑй станцине тӳленӗ укçа суммисене те;

г) ӗç выльӑхӗсене тата продуктивлӑ выльӑх-чӗрлӗхсене (чӗрӗллех е пуссассӑн пулнӑ продуктсене) сутнипе илнӗ суммӑсене, лайӑхрах е ӑратлӑ выльӑх-чӗрлӗхсем туянма е выльӑх-чӗрлӗхсене çӗнӗрен ӗрчетме тата йышлатма каякан капиталовложенисен счечӗ çине кӗртнӗ çав суммӑсене, çавӑн пекех Хӗрлӗ Çара валли лашасем панипе илнӗ суммӑсене те;

д) колхозсен подсобнӑй предприятийӗсенче укçан тата продуктсемпе тухнӑ производствӑллӑ затратӑсене;

е) пӗтнӗ пурлӑхшӑн тата тырпулсемшӗн государствӑн страховани оргӑнӗсенчен илнӗ страховка укçин суммисене.

Статья 5. Колхозсен натурӑллӑ дохочӗсем мӗн чухлӗ тӑнине палӑртнӑ чухне колхозрах хуçалӑх нушисем валли усӑ куракан продукцие (вӑрлӑхсем, вӑрлӑх ссудисене таварса пани, тӗкӗнмелле мар страховой вӑрлӑх фондне, продовольстви страховой фондне, инвалидсене пулӑшмалли фонда, ача яслисене тата тӑлӑхсене валли уйӑрса панисене тата ытти натурӑллӑ фондсене) государствӑн заготовка хакӗсем тӑрӑх хаклаççӗ, колхозниксем хушшинче валеçекен продукцие вара — государствӑн сутӑн илмелли хакӗсем тӑрӑх хаклаççӗ.

III сыпӑк.

НАЛОГ ХУМАЛЛИ СТАВКӐСЕМ ТАТА ТӲЛЕСЕ ТӐМАЛЛИ СРОКСЕМ

Статья 6. Налога çак ставкӑсем тӑрӑх шутласа хураççӗ:

а) контрактаци тата государство закупки йӗркипе продуктсем сутнипе илнӗ доходсенчен, çавӑн пекех тата колхозӑн нушисем валли колхозрах усӑ куракан продукци дохочӗсенчен — налог хумалли доходӑн 4 проценчӗ чухлӗ;

б) колхозӑн ытти дохочӗсенчен — налог хуракан доходӑн 8 проценчӗ чухлӗ.

Статья 7. Çӗрӗçне пӗрлешсе ӗçлекен юлташлӑхсем çине шутласа хуракан налог сумми 25 процент пысӑкрах пулать.

Налог тӳлемелли пӗррӗмӗш срокчен ялхуçалӑх артелӗн уставӗ çине куçнӑ çӗрӗçне пӗрлешсе ӗçлекен юлташлӑхсен налог суммине пысӑклатмалла мар.

Статья 8. Колхозсем налога çак срокпе тӳлесе татаççӗ: мартӑн 25-мӗшне — 20 процент; июнӗн 1-мӗшне — 10 процент; октябрӗн 1-мӗшне — 30 процент тата декабрӗн 1-мӗшне — 40 процент.

IV сыпӑк

НАЛОГ ТӐРӐХ ПАРАКАН ЛЬГОТӐСЕМ

Статья 9. Çӗнçӗре куçнисен хуçалӑхӗсенчен организациленнӗ, çавӑн пекех тата çӗнçӗре куçнисене хӑйсен составне йышӑннӑ колхозсене доход тӑрӑх илекен налог енӗпе СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ постановленисем тӑрӑх льготӑсем параççӗ.

Статья 10. Стихийлӑ инкек-синкек курнӑ колхозсене ӗçсынни депутачӗсен районри тата хулари Совечӗсен исполнительнӑй Комитечӗсем йышӑннӑ решенисем тӑрӑх, налог тӳлес енӗпе, налог тӳлесе татмалли çулталӑк хушшинчи вӑхӑтлӑха, отсрочкӑсем пама пултараççӗ.

Союзлӑ республикӑсен (облаçсем çине пайланманнисен) Халӑх Комиссарӗсен Совечӗсем, автономлӑ республикӑсен Халӑх Комиссарӗсен Совечӗсем, ӗçсынни депутачӗсен крайри тата облаçри Совечӗсен исполнительнӑй комитечӗсем стихийлӑ инкек-синкек курнӑ уйрӑм колхозсене налог тӳлес енӗпе, налог тӳлесе татмалли юлашки срокран шутласа, çулталӑклӑх таран отсрочкӑсем пама пултараççӗ.

Статья 11. Союзлӑ республикӑсен Халӑх Комиссарӗсен Совечӗсем, автономлӑ республикӑсен Халӑх Комиссарӗсен Совечӗсем тата ӗçсынни депутачӗсен крайри, облаçри, хулари тата районри Совечӗсен исполнительнӑй комитечӗсем ыйтнӑ тӑрӑх, стихийлӑ инкек-синкек курнӑ уйрӑм колхозсене, вӗсем курнӑ сиенӗн пысӑкӑшне кура, налог тӳлессинчен пӗтӗмпех е налогӑн пӗр пайне тӳлессинчен хӑтарма пултараççӗ.

Статья 12. СССР Халӑх Комиссарӗсен Советне, халӑх хуçалӑхӗн уйрӑм отраçлисене хавхалантарса пырас тӗллевпе, колхозсене доход тӑрӑх илекен налога тӳлессинчен хӑтарма, çавӑн пекех тата кирлӗ чухне колхозсене залли налог тӑрӑх льготӑсем туса пама право панӑ.

V сыпӑк

НАЛОГ ТӲЛЕМЕНШӖН ОТВЕТ ТЫТТАРАССИ

Статья 13. Çулталӑкри отчета финанс оргӑнӗсене срокра тӑратманшӑн, колхоз правленин председательне тата колхоз счетоводне (бухгалтерне), ӗçсынни депутачӗсен районри тата хулари Совечӗн исполнительнӑй комитечӗ йышӑннӑ тӑрӑх, кашнине 50-шар тенкӗ таран штраф тӳлеттереççӗ.

Статья 14. Çулталӑкри отчетра куç кӗретех тӗрӗс мар, счетоводство документсемпе тата кӗнекесенче çырса хунисемпе тӗл килмен даннӑйсем тӑратнӑшӑн, колхоз правленин председательне тата колхоз счетоводне (бухгалтерне) уголовнӑй йӗркепе ответ тыттараççӗ.

Статья 15. Доход тӑрӑх илекен налога колхозсем парвайхи черетпе тӳлеççӗ, налога кӑтартса панӑ сроксенче тӳлемесен, вара тӳлемен налог суммине халӑх суçӗн решенийӗсем тӑрӑх колхозсен текущий счечӗсем çинчен катса илеççӗ.

Налог тӳлемелли срока ирттерсе янӑшӑн тӳлемесӗр ирттерсе янӑ кашни кунтӑн 0,05 процент пени илеççӗ.

Статья 16. Заявленисем е жалобӑсем панишӗн налог шыраса илесси чарӑнса тӑмасть.

Колхозӑн тӳлемелли марри çинчен решени йышӑннӑ чухне, тӗрӗс мар илнӗ суммӑсене колхозсене 10 кун хушши срокра таварса памалла.

Статья 17. Ку закон ӗçе кӗнӗ май çак постановленисем хӑйсен вӑйне çухатнӑ тесе шутлас:

а) ЦИК тата СНК СССР 1936 çулти июлӗн 20-мӗшӗнче «Ялхуçалӑхӗн укçаллӑ налогне колхозсенчен доход тӑрӑх укçан илекен налогпа улӑштарасси çинчен» йышӑннӑ постановлени (Собр. зак. СССР 1936 г. № 40, стр. 339);

б) СНК СССР 1938 çулти февралӗн 1-мӗшӗнче «Колхозсем çине доход тӑрӑх укçаллӑ налог хурассин йӗркисем çинчен СССР Наркомфинӗн инструкцине çирӗплетесси çинчен» йышӑннӑ 102-мӗш номерлӗ постановлени (Собр. пос. СССР 1938 г. № 8, стр. 48).

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартӑн 1-мӗш.

ССР СОЮЗĔН 1-мĕш СОЗЫВРИ ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН VIII СЕССИЙĔ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔ ЙЫШĂННĂ ЗАКОНСЕМ

Ю. И. Палецкис юлташа СССР Верховный Совет Президиумĕн Председатель Заместителĕ пулма суйласси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ **çапла йышăнать:**

Юстас Игнатович **Палецкис** юлташа СССР Верховный Совет Президиумĕн Председатель Заместителĕ пулма суйлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 1-мĕш.

А. М. Кирхенштейн юлташа СССР Верховный Совет Президиумĕн Председатель Заместителĕ пулма суйласси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ **çапла йышăнать:**

Аугуст Мартынович **Кирхенштейн** юлташа СССР Верховный Совет Президиумĕн Председатель Заместителĕ пулма суйлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 1-мĕш.

И. Я. Варес юлташа СССР Верховный Совет Президиумĕн Председатель Заместителĕ пулма суйласси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ **çапла йышăнать:**

Иоганнес Якович **Варес** юлташа СССР Верховный Совет Президиумĕн Председатель Заместителĕ пулма суйлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 1-мĕш.

А. А. Волков юлташа СССР Верховный Совечĕн Президиум членĕн обязанноçĕсенчен хăтарасси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ **çапла йышăнать:**

Алексей Алексеевич **Волков** юлташа СССР Верховный Совечĕн Президиум членĕн обязанноçĕсенчен хăтарас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 1-мĕш.

П. К. Пономаренко юлташа СССР Верховный Совет Президиумĕн членне суйласси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ **çапла йышăнать:**

Пантелеймон Кондратьевич **Пономаренко** юлташа СССР Верховный Совет Президиумĕн членне суйлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 1-мĕш.

* * *

Хĕрарăмсен мартăн 8-мĕшĕнчи ĕçĕ çинчен

Мартăн 8-мĕшĕнче хĕрарăмсем тулли ĕç кунĕ ĕçлемелле тăвасси çинчен работницăсемпе хĕрарăм-служащисенчен сĕнӳсем килнĕ май, Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ çапла йышăнать:

Работницăсен тата хĕрарăм-служащисен пуçарăвĕпе килĕшсе **çапла тăвас:** мартăн 8-мĕшĕнче хĕрарăмсен тулли ĕç кунĕ ĕçлемелле.

Мартăн 8-мĕшне хатĕрленеççĕ

ИШЛЕЙ. Тăрăн ялсовечĕ ĕçхĕрарăмĕсен пĕтĕм тĕнчери Коммунистла кунне — мартăн 8-мĕшне хатĕрленме тытăнчĕ.

Нумаях пулмасть кунта драмкружок организациленĕ. Драмкружок членĕсем мартăн 8-мĕшĕнче спектакль лартса пама хатĕрленсе çитрĕç.

М. Маков.

* * *

Виçĕ пин литр сĕт суса илессишĕн

Дояркăра тăваттăмĕш çул ĕçлетĕп. Малтанхи çулсенче эпир выльăхсене йĕркеллĕ пăхма пĕлмен, çавна пула вĕсен продуктивлăхĕ пĕчĕккĕ пулнă. Фуражнăй ĕне пуçне сезонра 800—900 литр кăна сĕт суса илнĕ.

Халĕ пирĕн фермăра ĕç пĕтĕмпех урăхла тăрать. Лайăх вите пур. Ĕнесене зоотехника вĕрентнĕ пек пăхатпăр. Çакна май ĕнтĕ вĕсен продуктивлăхĕ те ӳсех пырать. Иртнĕ çулта кашни фуражнăй ĕнерен 2058 литр сĕт суса илтĕмĕр. Кăçал хам пăхакан ĕнесенчен вăтам шутпа 3000-шер литр суса илме обязательство илтĕм. Çакна пурнăçа кĕртессе лайăх шанатăп эпĕ. Январь уйăхĕнче 1086 литр сĕт суса илмелле пулсан 1291 литр суса илсе плана ытлашшипех тултартăм. Февраль уйăхĕнче 1744 литр суса илтĕм. Чи лайăх ĕнесем «Ада», «Венера», «Аля» кунне 18—20 литр сĕт параççĕ.

Ĕнесене кашни кун икшер хут хырчăкласа тасататпăр тата урама илсе тухса уçăлтарса çӳретпĕр. Эпĕ пăхакан ĕнесем кашни кунах хăйсене тивĕçлĕ рацион илеççĕ.

Пирĕн фермăра ĕнесене кунне 4 хут сăваççĕ. Эпĕ ĕнене васкамасăр тата тĕплĕн сăватăп. Ун чухне никампа та калаçмастăп. Сăвас умĕн тата суса пĕтернĕ хыççăн ĕне çиллисене массаж тăватăп.

Эпир, фермăра ĕçлекенсем, хамăрăн зоотехникăллă пĕлĕве ӳстерсех пыратпăр. Çакă ĕнтĕ пире ĕçре ӳсĕм тума май парать.

А. Цветкова.

Çĕрпӳ хулинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз ферминчи доярка.

Çĕрпӳ районĕнчи „Ĕмĕт“ колхоз çураки умĕн

«Ĕмĕт» колхозри пăру пăхакан стахановка Зинаида Егорова юлташ.

☆ ☆ ☆

Пахалăх тĕп вырăнта пулмалла

1937—39 çулсенче 264,6 гектар çинчен вăтам шутпа кашни гектартан 16,58 центнер тĕштырă, 13 гектар çинчен 135-шер центнер ытла çĕрулми пухса илтĕмĕр. Çаксене шута илсе Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитечĕ колхоза иккĕмĕш степеньлĕ диплом, 5 пин тенкĕ укçа. мотоцикл парса наградăларĕ. Колхозниксенчен виçĕ çын хăйсен паха ĕçĕсемшĕн свидетельствăсем илчĕç. Иртнĕ çулти результатсем те начар мар пирĕн. Вăтам шутпа илсен кашни гектартан 16,6 центнер тĕштырă, 180 центнер çĕрулми пухса илтĕмĕр. Кишĕр, сухан, купăста, хăяр тата ытти пахча-çимĕçсем те начар мар пулчĕç.

Çаксем ĕнтĕ эпир çĕнтерӳ туса пынине уççăн кăтартса параççĕ. Тăрăшса тата пысăк пахалăхпа ĕçлекен колхозниксем сахал мар пирĕн. Анчах та эпир малта пыракан колхозниксен ĕçне тивĕçлипе хаклама вĕренсе çитеймен-ха. Пирĕн колхозăн çĕрĕ пур тĕлте те пĕр пекех. Апла пулин те тырпул тухăçĕ пĕр бригадăра пысăк, тепĕр бригадăра пĕчĕккĕ пулать. Сăмахран, иртнĕ çулта Николаев юлташ ертсе пыракан 4-мĕш бригада вăтам шутпа кашни гектартан 19-шер центнер ытла тĕштырă пухса кĕчĕ. Калас пулать, ку бригада кашни çултах малта пычĕ. Çав вăхăтра Михайлов юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригадăн тырпул тухăçĕ 15-шер центнер ытларах кăна пулчĕ. Ку ĕнтĕ çакна уççăн кăтартса парать: 1-мĕш бригадăри колхозниксем 4-мĕш бригадăри колхозниксенчен начартарах ĕçленĕ. Çавăнпа та тырпул тухăçĕ начартарах пулнă.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ бригадăри колхозниксене ĕçкунĕсем хушса тӳлемелле пулнă. Анчах та ун пек тăваймарăмăр. Тупăшсене ĕçĕн пахалăхне кура мар, ĕçкунĕсен хисепне шута илсе валеçрĕмĕр. Тырпул, укçа-тенкĕ, пахча-çимĕç пур бригадăсенчи колхозниксем те ĕçкунĕсен хисепĕ тăрăх, пĕр виçепе илчĕç.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче те пурте пĕр пек ĕçлемеççĕ. Хăшĕсем çамрăк выльăхсене пăхса ӳстерес тата вĕсен продуктивлăхне ӳстерес тĕлĕшпе паха тĕслĕх кăтартаççĕ. Хăшĕсем çак ĕçре юлса пыраççĕ. Çак отраçлĕре те ĕçкунĕсемшĕн ĕç пахалăхне кура хушса тӳлемелле тусассăн лайăх пулмалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ Украинăри колхозниксене ĕçкунĕсемшĕн хушса тӳлемелле тăвасси çинчен постановлени йышăнчĕç. Çак постановлени колхозниксене ĕçшĕн тӳлес йĕркери тĕрĕсмарлăха пăрахăçа кăларма май парать. Партипе правительствăн çак решенине пирĕн республикăри колхозсенче те пурнăçа кĕртмелле тусан питех те лайăх пулĕччĕ.

Социализмлă ялхуçалăхĕ çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пырать. Колхозсенче çĕнĕ ĕç новаторĕсем нумай ӳсеççĕ. Вĕсем тырпул тухăçне ӳстерес, выльăх-чĕрлĕхрен ытларах тупăш илес— колхозсене пур енĕпе те тĕреклетес ĕçре пĕтĕм вăй-халне хурса кĕрешеççĕ. Çакăн пек малта пыракан колхозниксен ĕçне уйрăмăн хисепе илсе тӳлеме тытăнмалла пирĕн. Ун пек туни малта пыракан колхозниксене татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарĕ.

Н. СКУРАТОВ.

Колхоз счетоводĕ.

Çĕртен ытларах тупăш илме тăрăшатăп

Аттесемпе асаттесем çĕршĕн нумай кĕрешнĕ. Анчах та темĕн чухлĕ тăрăшсан та, темĕн чухлĕ кĕрешсен те хăйсене кирлĕ чухлĕ çĕр илеймен вĕсем. Пĕтĕм лайăх çĕр харампырсен аллинче пулнă. Çитменнине тата пĕчченхуçалăхра пурăнакансем хăйсен пур-çук çĕрĕсемпе те кирлĕ пек усă курайман. Колхозсем организациленни ĕмĕрсем хушши пынă тĕрĕсмарлăха пĕтерме май пачĕ. Халĕ пирĕн çĕр çителĕклĕ. Ĕмĕрлĕх усă курма ăна государство актипе çирĕплетсе панă.

Партипе Совет правительстви çĕрпе пĕлсе усă курма, çĕртен пысăк тупăш илсе тăма хушаççĕ. Пирĕн, колхозниксен, партипе правительство тата халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ пĕрмаях колхозсемшĕн тăрăшнине нихăçан та манма юрамасть. Çĕртен вăл мĕн пама пултарнине пĕтĕмпех илессишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

Уйĕç бригадин бригадирĕнче 11-мĕш çул ĕçлетĕп. Çак хушăра сахал мар опыт туянтăм. Хамăн ĕçри опытсем çинчен кĕскен каласа парас тетĕп.

Иртнĕ çулсенче эпир минераллă удобренисемпе нумай усă курнă. Тислĕк, торф тата вырăнти ытти удобренисене те кирлĕ чухлĕ турттарса кăларса, çĕре хывса пытăмăр. Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл кашни çулах ытларах та ытларах пухса калчасене апат патăмăр. Эпĕ ертсе пыракан бригада çулленех торф нумай турттарса кăларать. Иртнĕ çулта, сăмахран, 750 лав турттарса кăлартăмăр. Бригада çĕрĕ тислĕкпе тата торфпа витĕнсе ларчĕ. Çаксене пула ĕнтĕ пирĕн тырпул тухăçĕ ӳссех пырать. Иртнĕ çулта 85,5 гектар çинчен кашни гектар пуçне 19 центнер ытла, уйрăм участоксенче 25 е 27 центнер пухса илме пултартăм.

Пирĕн колхозниксем пур тĕрлĕ агротехникăллă ĕçсене те пурнăçа кĕртме хăнăхса пыраççĕ.

Çуракине хатĕрленме иртнĕ кĕркуннех тытăнтăмăр. Плугсене, сӳресене, сеялкăсене тата ытти машинăсене иртнĕ кĕркуннех юсаса лартрăм. Çитес çуркунне тĕрлĕ культурăсем 53 гектар çине акса хăвармалла. Вăрлăхсем кирлĕ чухлĕ сортласа хутăмăр. Бригадăна ĕç лашисем 20 пуç çирĕплетсе пачĕç. Кӳлмелли таврашсем пурте юсавлă.

Удобренисем хатĕрлесе турттарса кăларас енĕпе кăçал ытти çулхинчен те вăйлăн ĕçлерĕмĕр. Манăн бригада кăна 380 лав тислĕк, 816 лав торф уя турттарса кăларчĕ, 50 центнер минераллă удобрени кӳрсе килчĕ, 21 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 18 центнер кĕл пухса хатĕрлерĕ. 29 гектар çине юр тытнă.

Эпĕ ертсе пыракан бригада кăçал кашни гектартан 25-шер центнер тĕштырă туса илме обязательство илчĕ. Тăрăшса ĕçлесен, агротехникăна пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пырсан çеç çавăн чухлĕ тырпул туса илме пулать. Хамăр умма лартнă задачăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе чылай ĕçсем турăмăр. Анчах та умра татах та пысăк ĕçсем тăраççĕ. Пирĕн çураки ĕçĕсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттермелле.

Вăрлăха яровизаци туса акни тырпул тухăçне ӳстерме нумай пулăшать. Кăçал пĕтĕм çĕр лаптăкĕнчен çуррине ытла яровизациленĕ вăрлăхпа акатпăр. Иртнĕ çулсенче эпир кантăр вăрлăхне кăна хĕреслĕ майпа акнă, кăçал тĕштырăсене 50 процентран кая мар хĕреслĕ майпа акатпăр. Çакăн пек акни тырпул тухăçне ӳстерме пулăшнине колхозниксем лайăх пĕлеççĕ.

— Ытла тарăн сухаласа арлан тăприне çаварттарса пăрахатăр, çĕрĕн сĕткенне пĕтеретĕр,—тетчĕç малтанхи вăхăтра колхозниксем. Çак сăмаха итлеместĕп халĕ, суха кассисем 20—22 сантиметр тарăнăшĕнчен кая мар пулаççĕ. Çакăн пек тарăн сухалани те тырпул тухăçне ӳстерме нумай пулăшать.

Нумаях та пулмасть çураки ĕçĕсен планне турăмăр. Çуракине 5 кун хушшинче вĕçлеме йышăнчĕ манăн бригада. Эпир ăна пурнăçа кĕртме пултаратпăр.

И. НИКОЛАЕВ.

Уйĕç бригадин бригадирĕ.

Пирĕн кăçалхи ĕмĕтсем

Кашни фуражнăй ĕнерен 1939 çулта 807 литр, 1940 çулта 1.604 литр сĕт суса илнĕ. Кăçал 2-шер пин литр суса илме йышăнтăмăр. Кашни доярка хăйĕн ĕçне лайăх пĕлсе тăрать. Вĕсем кăтартуллă ĕçлеме пулса пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртăва тухнă. Евдокимовăпа Алексеева юлташсен ĕçне уйрăмăн палăртмалла. Вĕсем хăйсем çумне çирĕплетнĕ ĕнесене лайăх пăхаççĕ, сĕт ытларах суса илеççĕ.

Иртнĕ çулта хăшпĕр ĕнесене «брак» шутласа, сутса яма хатĕрленнĕччĕ. Сĕт сахал паракан çак ĕнесене доярка Евдокимова пăхма тытăнчĕ. Зоотехник ен канашĕсене асра тытса ĕçлерĕ вăл. Халĕ ĕнтĕ çав ĕнесене ниепле те «брак» ĕнесем тесе калама çук. «Красулька» иртнĕ çулсенче 10 — 12 литртан ытла паман пулсан, халĕ 15—16 литр е хăшпĕр кунсенче 19-шер литр сĕт парать.

Çапла ĕнтĕ дояркăсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса кĕрешме тытăнчĕç. Ĕнесене кашни кун 4-шер хут сăваççĕ. Пирĕн ферма государствăна сĕт тăратмалли плана тахçанах тултарнă. Тепĕр 3—4 кунран колхозниксемшĕн те тӳлесе тататпăр.

Иртнĕ çулта çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех пăхса ӳстертĕмĕр. Паян куна илсен 35 ĕнерен 33 ĕне пăрулані. Кăçалхи пăрусене те пĕтĕмпех пăхса ӳстерме тата кашнин йывăрăшне 600-шер грамм хутшăнса пымалла тума тăрăшатпăр.

Пире чăвашсен зоотехникăллă опытлă станцийĕнчи работниксем нумай пулăшаççĕ. Зоотехникăна пурнăçа кĕртсех пыратпăр. Кăçал ĕне витине автопоилка кĕртме шутлатпăр. Автопоилка кăна сĕт тухăçне 5 процентран кая мар ӳстерме пулăшать.

Шултра тата лайăх ăратлă ĕнесем ытларах кирлĕ пире. Çавăнпа та ăратлă ĕнесен пăрувĕсене суйласа илсе, уйрăм апатпа лайăх тăрантарса ӳстеретпĕр.

Килес çулла ĕне фермин организациленĕренпе 10 çул тултарать. Вунă çул тулнă куна пысăк çитĕнӳсем туса кĕтсе илетпĕр.

Е. ЯКИМОВ.

Ферма заведующийĕ.

Ĕç ăнăçлăхĕ туртăм вăйĕнчен килет

МТ Станцийĕ пире кашни çулах пысăк пулăшу парать. Анчах та тракторсемпе тата комбайнсемпе ĕçлесе парассине кăна шанса ларма пултараймастпăр. Яланах хамăр колхозри туртăм вăйĕпе — лашасемпе ытларах ĕçлеме тивет. Лашасене лайăх пăхни, пĕрмаях мăнтăр усрани кирлĕ.

Фермăра 12 кĕсре, пĕр ăратлă ăйăр тата çамрăк тихасем 22 пуç усратпăр. Çапла вара уй ĕçĕсене ирттернĕ çĕре 80 лашаран ытла мар хутшăнаççĕ. Ялхуçалăхĕнчи тĕп ĕçсене, уйрăмах çуракине ирттернĕ çĕрте туртăм вăйĕ тĕп вырăнта тăрать. Çакна шута илсе пирĕн конюхсем лашасене лайăх пăхассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура Петров, Яковлев, Семенов юлташсем малта пыраççĕ. Вĕсем пăхакан лашасем мăнтăр. Ытти конюхсене те вĕсен примерĕпе ĕçлеме вĕрентетпĕр.

Халĕ хĕле кĕнĕренпе 700 кубла метр йывăç турттарса кăларнă, ытти ĕçсене те сахал мар тунă. Çапах та пирĕн лашасем начар мар, мĕншĕн тесен вĕсене зоотехника вĕрентнĕ пек пăхатпăр. Вăхăтра хырчăкласа тасататпăр. Колхоз утă-улăм, сĕлĕ кирлĕ чухлĕ уйăрса пачĕ. Выльăх апатне перекетлес шутпа улăма тураса, сĕлĕпе тата посыпкăпа хутăштарса çитеретпĕр.

Пирĕн колхоз çуракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерме хатĕрленет. Лашасене мăнтăр усрани çуракине отлично ирттерме пулăшмалла.

С. АНДРЕЕВ.

Лаша фермин заведующийĕ.

Колхозăн приходпа расход смети

Февралĕн 25-мĕшĕнче колхоз правленийĕн ларăвĕ пулса иртрĕ. Кунта 1941 çулти приходпа расход сметине пăхса тухса çирĕплетрĕç.

Колхоз тырпул, пахча-çимĕç, выльăх-чĕрлĕх тата ытти ĕçсенчен 168.437 тенкĕ доход илме палăртрĕ. Укçа-тенкĕне колхозăн обществăллă хуçалăхне тĕреклетсе пырас ĕçе ытларах расходлама пăхаççĕ. Капитальнăй строительство ĕçĕсене ирттерме 54 пин тенкĕ, пайланман фонда ӳстерсе пыма 20 пин тенкĕ расходлама пăхрĕç.

(Хамăр инф.).

«Ĕмĕт» колхозри 3-мĕш бригадăн бригадирĕ И. Н. Николаев юлташ, ăна 1939 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Пĕчĕк кĕмĕл медалĕпе наградăланă.

☆ ☆ ☆

Пирĕн хата-лабораатори ĕçĕсем

1941 çулта 7 миллиард та 900 миллион пăт тĕштырă туса илмелле. Çавăн пек задача кăларса тăратнă пирĕн умма партипе совет правительстви тата халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ. Çак задачăна эпир малта пыракан агротехникăна пурнăçа кĕртсе пырсан ăнăçлăн татса пама пултаратпăр. Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн колхозниксем агротехникăна çине тăрса вĕренме тытăнчĕç. Агротехникăллă пропагандăна колхозри хата-лабораатори урлă туса пыратпăр. Иртнĕ кĕркуннеренпе стахановла шкул ĕçлет. Унта çак вăхăта çитсе ВКП(б) XVIII съезчĕ ялхуçалăхĕ тĕлĕшпе йышăннă решенисем çинчен, удобренисене сыхласа усрасси тата вĕсемпе мĕнле усă курасси, ӳсен-тăрансен пурнăçĕсем çинчен Дарвин, Цицин, Лысенко вĕрентни, вăрлăхсене акма хатĕрленесси, махорка туса илесси тата ыттисем çинчен те вĕреннĕ.

Лекцисемпе калаçусене малта пыракан колхозсен опычĕсемпе сыхăнтарса ирттерсе пытăм. Хамăр колхоз тунă опытсем те начар мар пирĕн. Тырпул тухăçĕ çултан çулах ӳссе пычĕ. Занятисем интереслă иртеççĕ.

Колхозниксем хата-лабораторине çӳресе хăйсен агротехникăллă пĕлĕвĕсене ӳстерсех пыраççĕ. Халĕхи вăхăтра кунта акмалли вăрлăхсен пахалăхне тĕрĕслетпĕр. Çитес кунсенче кĕрхи калчасем юр айĕнче мĕнле сыхланса тăнине сăнаса пĕлме тытăнатпăр. Колхозниксем çĕнĕ опытсемпе интересленеççĕ.

Кăçал пирĕн колхоз иртнĕ çулхинчен те тухăçлăрах тырпул туса илме пулчĕ. Мĕнле ӳстерме пулать-ха тырпул тухăçне? Вырăнти тата минеральнăй удобренисемпе пĕлсе усă курни кирлĕ. Тислĕк, торф тата ытти тĕрлĕ удобренисем тăкас пулсан пусуçаврăнăшне, хăш участока мĕнле культура акассине тата хăш вырăнта тăпра мĕнлине пĕлес пулать. Вăрлăхсене типĕ майпа 116 центнер, формалинпа 136 центнер тата термически йĕркепе 25 центнер протравить туса акатпăр. Тулă вăрлăхне 80 центнер, сĕлĕ — 72 центнер яровизацилетпĕр.

Ефремовецсен опычĕ кашни тăваткăл метр çĕр çине 600—700 пĕрчĕ акса хăварни усăллине çирĕплетсе панă. Кун пек тăвас пулсан вăрлăха хĕреслĕ майпа акмалла. Кунпа пĕрлех тырăсем миçе процент шăтса тухма пултарассине те малтанах тĕплĕн пĕлмелле. Тырпул тухăçне ӳстерес ĕçре ака срокĕ тĕп вырăн йышăнать. Тăпра нӳрĕ чухне, пĕрчĕсене тăпра айне пĕр пек тикĕс витĕнтерсе хăварма тăрăшмалла.

Çĕре сухаланă чухне кашни çул пĕрер сантиметр тарăнлатса пымалла, анчах та кунта тăпра мĕнлине шута илмелле.

Тырă сорчĕсене суйласа илесси пысăк вырăнта тăрать. Сăмахран, иртнĕ çулта эпир тĕрлĕ сортсем акса турăмăр. Кашни гектартан «Диппе» сортлă сĕлĕ 19,36 центнер, «Московская А—315» 15,25 центнер тухрĕ. Çĕрулми «Лорх» сортли гектартан 205 центнер, «Волыйман» сортлине 156,6 центнер пухса илтĕмĕр.

Эпир малашне хамăр патра лайăх пулакан сортсене акса тума шутлатпăр.

Г. ЕРЕМЕЕВ.
Колхоз агрономĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи «Ĕмĕт» колхозра. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: сулахайра—1931 çултанпа конюхра ĕçлекен колхозник Иван Петрович Петров юлташ хăй пăхакан «Октябрь» ятлă лашапа; варринче — фермăри çамрăк пăрусем; сылтăмра—фермăри ĕнесем. Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Çанталăк лайăхланса пынă май Албанири фронтра вăрçă ĕçĕсем çĕнĕрен вăйланнă. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче малти отрядсем хушшинче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Югославири «Време» хаçат çапла пĕлтерет: мартăн 3-мĕшĕнче Тепелене районĕнче тата Клисурăран çурçĕр енче пехота отрячĕсем хушшинче çапăçусем пулса иртнĕ.

Англи бомбардировщикĕсен соединенийĕсем, тенĕ Англин Грецири сывлăш вăйĕсен командованийĕ кăларнă коммюникере, Бератри аэродром çине бомбăсем вăйлăн пырса пăрахнă. Бомбăсем тивнипе пысăк пушар тухнă, пушар ялкăшни 50 миляран курăннă. Итали çарĕн верховнăй командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Итали самолечĕсем греквсен базисемпе оборона сооруженийĕсем çине, çавăн пекех Лариса çине бомбăсем пырса пăрахнă.

* * *

Çурçĕр Африкăра вăрçă ĕçĕсем Джарабуб оазисĕн укреплениллĕ районĕнче сарăлса пыраççĕ. Англичансем, тенĕ Итали командованийĕн сводкинче, Джарабуба хирĕç вăйлă атака тунă. Германи авиацийĕ çав-çавах англичансен Ливири базисем çине пыра-пыра тапăнать. Германин авиаци чаçĕсем, тенĕ Германи сводкинче, Адждеби сывăхĕнче англичансен моторизованнăй войскисене атакăланă. Нумай бомбăсем автоколоннăсем çине тата войскăсем çине ӳкнĕ. Ливи çыранĕнче Германин моторизованнăй отрячĕпе англичансен бронетанковăй чаçĕ хушшинче çапăçу пулса иртнĕ.

* * *

Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере каланă тăрăх, Хĕвелтухăç Африкăра, Итали Сомалийĕнче, Англи войскисем Абруццкий герцог Вилли ятлă пункта туртса илнĕ (Могадишоран çурçĕр еннелле 80 миляра).

Итали командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Абиссинире, Гондар патĕнчен хĕвеланăç енче Итали войскисем Англи чаçĕсен атакине сирсе янă.

Эритрейăри Керен районĕнче Англи чаçĕсем малалла наступлени туса пыраççĕ. Рейтер агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Инди чаçĕсемпе де Голль генералăн войскисенчен тăракан Англи вăйĕсем Мешелитский перевала туртса илнĕ (Керенран çурçĕр еннелле 15 миляра). Англи войскисен тепĕр чаçĕ Керенран кăнтăр-хĕвелтухăç еннелли 4 миляри позицисене йышăнса тăрать. Итали войскисем, итальянецсен Асмара районĕнчи позицийĕсене хӳтлес тесе, Баренту патĕнчен каялла чакнă (Керенран кăнтăр енче).

* * *

Англи фронтĕнче Германи авиацийĕн пысăк мар активлăхĕ палăрать. Ыран мартăн 4-мĕш тенĕ чух çĕрле, тенĕ Германи командованийĕн сводкинче, Германи бомбардировщикĕсен соединенийĕсем Кардиффри тата Ньюкаслри портсемпе промышленность сооруженийĕсем çине пырса тапăннă, фугаслă бомбăсемпе вут чĕртсе яракан бомбăсем нумай пăрахнă. Çавăн пекех Лондон çывăхĕнчи хăшпĕр аэродромсем çине те бомбăсем пырса пăрахнă. Çав каçах, тет Рейтер агентстви, Англи самолечĕсем Рейн облаçĕнчи хăшпĕр объектсем çине пырса тапăннă.

Мартăн 4-мĕш. (ТАСС).

Рейтер агентстви Германи контрблокади çинчен

ЛОНДОН, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: çар специалисчĕсем шутланă тăрăх, юлашки вăхăтра Германи авиацийĕ хăйĕн тактикине кăштах улăштарнă, Англине хирĕç массăллă атакăсем тумасть. Юлашки темиçе эрне хушшинче Англи çине пырса тапăннă соединенисенче 120 самолетран ытла пулман. Çакă вăл çанталăк условийĕсем начар пулнинчен кăна килмест. Германи командованийĕ хальхи вăхăтра сывлăш-çар флочĕпе подводнăй флотăн ĕçĕсене сыхăнтарса пырас ĕç çине уйрăмах тимлĕн пăхать пулас. Хальхи вăхăтра нимĕçсем инçете вĕçекен самолетсемпе Англи суднисен караванĕсем çине тапăнас ĕçре усă кураççĕ. Вĕсем Америкăран Англине вăрçă материалĕсем турттарса пымалли çулсене тупма тата вĕсене пăсма тăрăшаççĕ. Çак тĕллевпе ĕнтĕ Германи самолечĕсем Атлантика океанĕ çинче нумайрах вĕçсе çӳреме пуçланă, Англи порчĕсем çине бомбăсем пырса пăрахас, гаваньсем патне минăсем пăрахса çӳрес ĕçе вăйлатнă.

Çĕр кĕскелсе килнĕ май, тет агентство, противник самолечĕсене Англи çине массăллăн пырса тапăнма йывăрланать. Анчах та хальхи вăхăтра пысăк мар соединенисемпе пырса тапăннă чух нимĕçсем çĕрлехи сехетсенче 400—500 самолетпа усă курма пултараççĕ.

Англи авиацийĕ кăнтăрла пыра-пыра тапăннипе противникăн Çурçĕр тата Хĕвеланăç Францири, Голландири тата Бельгири аэродромĕсене чылаях пысăк сиен кӳнĕ. Бомбардировщиксем ларакан темиçе аэродрома пысăк сиен кӳнĕ.

Англире „Дейли уоркер“ хаçата хупнине хирĕç кампани сарăлса пырать

ЛОНДОН, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Хейсра (Миддлсекс графстви) «Дейли уоркер» хаçата хӳтлемелли Лига организациленĕ. Лига членĕсен пысăкрах пайĕ вырăнти промышленноçлă икĕ пысăк предприятири рабочисенчен тăрать. Организациллĕ пухура Лигăна 54 çын çыраннă, Лигăн ертсе пыракан органне суйланă, унта çаксем кĕнĕ: фабрикăсенче ĕçлекен 4 рабочи, 2 килхуçи хĕрарăмĕ, лейбористла партин вырăнти организацин секретарĕ тата тред-юнионсен вырăнти совечĕн председателĕ.

Шотландире тред-юнионсен 120 организаци «Дейли уоркер» хаçата хупнине хирĕç протест резолюцийĕсем йышăннă. Вăл организацисем хушшинче—тред-юнионсен икĕ исполкомĕ тата кооперативла партин 4 организацийĕ. Çав исполкомсенчен пĕри тред-юнионсен 83 организацине пĕрлештерсе тăрать, вăл организацисенче 130—150 пин член шутланать. Çак организацисен членĕсем хушшинче «Дейли уоркер» хаçата хӳтлесе çырнă брошюрăна 65 пин экземпляр сутнă. Хартфорд графствинчи пĕр авиазаводра «Дейли уоркер» хаçата хӳтлеме рабочисем Лига организацилеме йышăннă. Кембриджпа Борнмутри профсоюзсен совечĕсем «Дейли уоркер» хаçата хупнине хирĕç протест резолюцийĕсем йышăннă.

Таипе Индо-Китай хушшинчи калаçусем тавра

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Виширан пĕлтернĕ тăрăх, Франци влаçĕсен представителĕсем çапла каланă: Франци Таине территорисем пама килĕшнĕ, анчах та Япони условийĕсене Франци пĕтĕмĕшпех йышăннă текен пĕлтерӳ тĕрĕс мар, тенĕ.

Япони карапĕсем Кăнтăр-Китай тинĕсĕнче пухăнса тăни

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Шанхайри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: обозревательсем каланă тăрăх, Фучжоу çывăхĕнче (Фуцзянь провинцийĕ) Японин 100 суднине курнă, вĕсем хушшинче çар карапĕсем те пулнă. Çар карапĕсем кăнтăр еннелле ишсе кайнă.

Болгарин Лондонри посланникĕ отставкăна тухнă

ЛОНДОН, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Болгарин Лондонри посланникĕ Момчилов хăй отставкăна тухма шутлани çинчен Болгари правительствине мартăн 2-мĕшĕнче телеграф тăрăх пĕлтернĕ. Мартăн 3-мĕшĕнче Софирен Момчилов отставкине йышăнни çинчен официальнăй пĕлтерӳ илнĕ. Момчилов, тет агентство, çапла каланă, эпĕ Болгари правительстви Болгарине виçĕ держава пакчĕ çумне пĕрлештернипе тата Болгарине Германи войскисене кĕртнипе килĕшместĕп, тенĕ.

КĔСКЕН

✦ Стокгольмри çăкăр пĕçерекен пысăк заводсенчен пĕринче çăкăр пăсĕнчен технически спирт туса хатĕрлес ĕçе организациленĕ. Çăкăр пăсĕнчен тăвакан спиртра 96 процент таса спирт пулать.

✦ Бейрутра (Сирия) Франции 20 офицерне тата чиновникĕсене 5 уйăхран пуçласа 5 çула çити тĕрмере хупса усрамалла тунă. Вĕсене де Голль генерала усă кӳрекен ĕçсем тунăшăн айăпланă.

✦ Негрсен паллă писателĕ Майкл Голд литературăра ĕçлеме пуçланăранпа 25 çул тултарнă ятпа пулнă митингра (Нью-Йоркра) 3.500 çын ытла пулнă. Митингра тухса каланă Браудер тата негрсен писателĕ Райт Майкл Голдăн литературăри тава тивĕçлĕ ĕçĕсене, вăл рабочи класс ĕçне парăннă çын пулса тăнине паллă тунă.

✦ Вильмингтон патĕнчи (Çурçĕр Каролина штачĕ) Камп Девисра артиллерин зенитнăй полигонне тунă çĕрте ĕçлекен 4 пин плотник тата ытти рабочисем забастовка пуçланă. Рабочисем ĕç укçине хăпартма тата хăйсен профсоюзне йышăнма ыйтаççĕ. США çар министрĕн заместителĕ Паттерсон мартăн 3-мĕшĕнче забастовкăсемпе çыхăнса тăракан тавлашуллă ыйтусене йĕркелесе яма нацилле арбитраж совечĕ тума сĕнӳ панă.

Чир-чĕртен витаминсемпе сыватни

Профессор А. Кирхенштейн Пĕтĕм Союзри витамин комитетĕнче тунă доклад

МУСКАВ, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Мускаври Ученăйсен Çуртĕнче Пĕтĕм Союзри витамин комитечĕн анлă ларăвĕ пулнă. Совет Союзĕнчи пысăк витаминологсенчен пĕри — Ригăри университет профессорĕ А. М. Кирхенштейн «Витаминсем профилактикăра тата инфекциллĕ чирсенчен сыватас ĕçре» темăпа доклад тунă, унăн докладне пысăк интереспа итленĕ.

Нумай тĕпчесе сăнанипе çакна палăртнă: «А» тата «С» витаминсемпе вăхăтра профилактика туни организм чире хирĕç кĕрешессине вăйлатать, чир-чĕртен витаминсемпе сыватни чир процесне çăмăллатать тата ăна пачах чарса лартать. Витаминсене ялан пекех таблеткăсемпе е сĕткенпе ĕçеççĕ. Профессор Кирхенштейн шухăшĕпе, чиртен сыватнă чух «С» витамина организма япи пысăкрах усă парать. Пысăк дозăллă инъекцисем крупознăй пневмонипе чирленĕ çынна та пысăк пулăшу пыраççĕ.

Корь чирĕпе пур ачасем те чирлемелле тесе шутлаççĕ. Çапла шутлани вăл тĕрĕс мар, тет профессор Кирхенштейн. Ачана апатпа тăтăшах çителĕклĕ таран витамин парсан, ăна корь лекмесен те пултарать. Пуриншĕн те паллă, профилактикăллă вакцинаци хыççăн та ачасен пĕр пайĕ дифтерипе чирлет. Çакă вăл ачасен апатĕнче витаминсем çителĕксĕр чухне пулать.

Витамин промышленноçне вăйлатасси, аслă шкулсенче витаминологи кафедрисем тăвасси, витамин çинчен халăх валли лекцисем организацилесси, брошюрăсем кăларасси т. ыт. те — Наркомздравпа Наркомпищепромăн паянхи задачи.

Доклад тăрăх хăйсен шухăшĕсене тухса калакансем нумай пулнă, докладчик кăларса тăратнă ыйтусем наукăшăн пысăк вырăн йышăнса тăнине паллă тунă. Латви ССР Верховный Совечĕн Президиум Председателĕн государствăллă пысăк ĕçĕпе пĕрлех наукăра пысăк ĕç туса пыракан профессор Кирхенштейна лаурури çынсен ячĕпе профессор Б. И. Збарский хĕрӳллĕн саламланă.

Орел облаçĕнче кок-сагыз акма хатĕрленеççĕ

ОРЕЛ, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Кок-сагыз акмалли çĕр лаптăкĕсене ӳстермелли тата кок-сагыз тухăçлăхне хăпартмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленине колхозниксем хĕрӳллĕн сӳтсе-яваççĕ.

Облаçра халиччен пысăк тухăçлăх туса илнĕ колхозсем кок-сагыз акма культурăлатнă торфяниксене, тырă лайăх пулакан, тислĕкпе лайăх çемçетнĕ участоксене уйăраççĕ.

Знаменски районри Тургенев ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксем пĕр çулти плантацисем çинче гектартан 35-шер центнер, икĕ çулти плантацисем çинче 50-шар центнер кок-сагыз тымарĕ туса илме обязательство панă.

Звеньевойсем А. С. Музалевская тата П. П. Музалевская гектартан 60—80 центнер тымар туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Знаменски, Стародубски районсенчи тата облаçри ытти районсенчи колхозсем кăçалхи çул кок-сагыз акса тăвакан çĕр лаптăкне ӳстереççĕ.

Чухăнсемпе вăтам хресченсен хуçалăхĕсене пулăшу параççĕ

РИГА, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Латви ССР Совнаркомĕ тата Латвири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ чухăнсемпе вăтам хресчен хуçалăхĕсене пулăшу парас тĕлĕшпе тумалли мероприятисене çирĕплетнĕ. Чухăн хуçалăхсене ĕне туянтарас тĕлĕшпе 1941 çулта 37.700 ĕне тата пăрусем илме йышăннă. Выльăх-чĕрлĕх туянма кăçалхи çул хресченсене 9.048 пин тенкĕ кивçен укçа параççĕ. Кунсăр пуçне чухăнсен хуçалăхĕсене кивçен вăрлăх—улăх-çарана акмалли курăксен 800 центнер вăрлăхне параççĕ.

50 машинно-тракторнăй станцисĕр пуçне, машинăллă-лашаллă прокат пункчĕсем 517 пункт организацилеççĕ, вăтам шутпа кашни вулăсрах пĕрер пункт пулать.

Помещиксен национализациленĕ именийĕсенчи вакă инвентаре чухăн хуçалăхсене параççĕ. Пӳртсем тата килхушшинчи хуралтсем тума чухăн хуçалăхсене вăрман параççĕ.

Техниксен шкулĕнчи занятисем

Мартăн 1-мĕшĕнче Пĕтĕм Союзри техниксен шкулĕнчи 6 отделенире пуринче те занятисем пуçланнă.

Шкула производствăн чи лайăх мастерĕсене, цехсен начальникĕсене, предприятисенчи паллă стахановецсене илнĕ. Студентсем хушшинче—Совет Союзĕн 12 Геройĕ, вăл шутра «Седов» пăрçĕмренĕн легендарлă дрейфĕн 9 участникĕ, СССР Верховный Совечĕпе союзлă республикăсен Верховный Совечĕсен 53 депутачĕ, ССР Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă 187 çын. Шкулта вĕренекенсен шутне промышленноçăн тĕрлĕ отраслисенчи стахановла движенине пуçарса яракансене—Гудов, Бусыгин, Швиненко юлташсене тата ыттисене те илнĕ.

Курортсен сезонĕ умĕн

Кавказри минераллă шывсем çинчи курортсем çурхи-çуллахи сезона хатĕрленеççĕ. Кăçалхи çул Пятигорскра 10 санаторий ĕçлемелле пулать, Железноводскра — 15, Ессентукире — 24 тата Кисловодскра — 55 санаторий. Вĕсенче апрель — сентябрь уйăхĕсем хушшинче 120 пин çынна чиртен сыватаççĕ. Амбулаторнăй мелпе сыватмалли чирлĕ çынсем çине пысăк тимлĕхпе пăхаççĕ. Курсовочниксем валли пурин валли те хваттерсем тата диэтăллă апат хатĕрлесе параççĕ.

Чăваш халăх поэчĕн С. В. Эльгерĕн «Хĕнхур айĕнче» поэми тăрăх Трофимов çырнă «Чакка» пьеса Чăвашсен Государство Академи театрĕнче. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. Алексеев—Тевенеш ролĕнче. К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Çирĕм çул ĕлĕкрех

(Асаилӳсем)

Мускавра 1922—24 çулсенче тухса тăнă «Ĕçлекенсен сасси» журналра Семен Васильевичăн малтан çырнă хăшпĕр сăввисем пичетленсе тухнăччĕ. Вĕсен айне «С. Е.» е тата «С. Эльгерин (Вăрнарта тухса тăракан «Шуçăм» журналăн 15-мĕш №-рĕнчен)» — тесе çырнă.

Çав журналрах пуштă уйрăмĕ текен пайра:

> «С. Эльгер, эсир çырнă сăвăсене редакци хавассăн йышăнать. Сăвăсене редакцине ярса тăрăр»

тесе çырнă вырăн пур.

Семен Васильевич хăй именерех тăнă пирки пулас (унăн ун пек йăла пур), «Ĕçлекенсен сассине» хăйĕн сăввисене яман. Ку сăвăсене редакци вĕренекенсем алăпа çырса кăларса тăнă журналран илсе пичетленĕ.

Эльгер Вăрнарти техникумра вĕренмен-çке, мĕнле майпа унăн сăввисем Вăрнарта вĕренекенсен журналне лекнĕ-ха?

Ун чухне Хусанта, Ульяновскра тата хăшпĕр техникумсенче литература кружокĕсем пулнă пулин те, çырма тытăннă авторсене пĕрлештерсе тăракан чăн-чăн литература организацийĕ пулман. Çырма тытăннă чăваш поэчĕсем пĕр-пĕрин патне çырусем çӳретсе тата произведенийĕсене ярса парса çыхăну тытатчĕç. Вăрнарта вĕреннĕ чухне çапла ман патăма Çеçпĕл Мишши, Тал-Мăрса, С. В. Эльгер т. ыттисем хăйсен сăввисене янăччĕ. Вĕсене, литкружокра пăхса тухса, эпир хамăр журнала кĕртеттĕмĕр.

Паллашасса эпĕ С. В. Эльгерпе Хусанта ĕçленĕ чухне 1919—20 çулсенче паллашрăм.

Семен Васильевичпа эпир чăваш шкулĕсем валли учительсем вĕрентсе кăларакан курсра пĕрле пĕр класра вĕрентĕмĕр. Пурăнасса та пĕр çĕрте, пĕр общежитире пĕрле пурăнаттăмăр. Эльгер ун чухнех литературăпа питĕ интересленетчĕ, çавăнпа эпир иксĕмĕр унпала çывăхах туслашрăмăр. Эпĕ комсомол организацинче, хаçатра тата красноармеецсен театрĕнче ĕçленĕ май хулана ытларах тухса çӳреттĕм. Семен Васильевич манран литература хыпарĕсене, кам-кам мĕнле пьесăсем куçарни çинчен тата ытти çинчен те ыйтса пĕлетчĕ.

Ун чухнех унăн «Вăрçă хирĕсенче» ятлă дневникĕ тата сăвăсем çырнă тетрадь пурччĕ. Хушăран эпир пĕр-пĕрне хамăр çырнисене вуласа параттăмăр.

Унăн ун чухне «Çутçанталăк сăввисем» ытлараххчĕ.

Чăваш красноармеецсен театрĕнче режиссер пулса ĕçленĕ Г. В. Тал-Мăрса драматургпа паллашрăмăр. Вăл та, империализм вăрçинче пулса аманнăскер, вăрçă çинчен пĕр-пĕр произведени пек çырса парасшăнччĕ. (Унăн усраннă пĕр тетрадĕнче вăл çавна çырма тытăннă сыпăк пур).

Хусантан вĕренсе тухнă хыççăн Семен Васильевич хăйсен ялĕнче Пысăк-Упакассинчи (Йĕпреç р.) учитель пулнăччĕ. Эпĕ Вăрнарти педтехникума вĕренме куçрăм.

Пĕр-пĕрин патне çыру çырса тăнипе çырлахаймасăр, эпĕ çурранах Семен Васильевич патне пĕр 3—4 хут хăнана кайса килтĕм. Вăл ку вăхăтра «Хĕнхур айĕнче» поэмăна çырнă. Мана «Кушлавăш уйĕ çинчен», «Куланайшăн» тата ытти сыпăксене вула-вула пачĕ. Хăйĕн произведенийĕнче асăнакан Пахомка ятлă утаман çинчен чăвашсем хушшинче мĕн калаçнине ыйтса пĕлетчĕ. Поэмăн тĕп геройĕ **Чакка** пурнăçра пулман пулсассăн, Пахомка типĕ пулнах пулĕ. Мĕншĕн тесессĕн Эльгерсен енче кăна мар, пирĕн енчи ялсенче те ун çинчен нумай калаçатчĕç. Вăл Патаккасси ялĕнче (с. Туваны) пулнине, Сăр вăрманĕнче пурăннине калатчĕç.

Эльгер вăл вăхăтра пулăшу паракан комитет столовăйĕнче активлă ĕçлетчĕ. Хăйсен ялĕнчи хресченсем ун патне тĕрлĕ хутсем çыртарма, тĕрлĕ ĕçсем çинчен канашласа пăхма, «ăс ыйтма» пыратчĕç. Наука ыйтăвĕсемпе, литературăпа интересленекен çывăх юлташĕсем те пурччĕ унăн хăйсен ялĕнче. Çав типсене илсе сăнласа панă пек туйăнать халĕ «Шурăмпуç килсен» ятлă повеçĕнче (Çитăр Иванĕ, Муççа т. ыт. те).

Хăшпĕр вĕренекенсемпе учительсем хушшинче ун чухне чăваш литературине аталантарма кирлех мар, унăн уссиех пулас çук текен çынсем пурччĕ. Пĕрре Семен Васильевич, те манăн шухăша пĕлес тесе, те чăваш литератури ун чухне начартарах та питĕ сахал пичетленнине кура, те чăнах та хăй пуçне те çавăн пек шухăш пырса кĕнипе, мана çав сăмахсем çинчен каласа панăччĕ. Кăштах калаçкаланă хыççăн вăл ун чухне татсах чăваш литератури кирли çинчен, хăй çине тăрсах малалла литература енĕпе ĕçлесси çинчен каларĕ.

Эльгер патне çавăн пек кайса çӳрени, юлташсем хăйсен произведенийĕсене хамăр пата ярса тăни пире те литература енĕпе хаваслантаратчĕ.

Эльгер Шупашкара ĕçлеме килсессĕн эпир унпа тата çывăхрах паллашрăмăр. Литература организацинче ĕçлеме тытăнтăмăр.

Çапла ĕнтĕ, редакцисем Эльгерĕн сăввисене 1922—23 çулсенчех хавассăн йышăннă, халĕ унăн мĕнпур произведенийĕсене чăваш халăхĕ кăмăлласа йышăнать.

Вăл хăйĕн паха произведенийĕсемпе кăна мар, çамрăксене литература ĕçне вĕрентес енĕпе те чăваш совет литературинче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл литературăри тăшмансемпе, буржуаллă-националистла туртăмсемпе вирлĕн кĕрешнĕ. Халăх поэчĕн С. Эльгерĕн 20 çул хушшинчи творчествине пăхса тухнă май, эпир çакна пысăк хаваслăхпа палăртатпăр. Чăваш литературинче вăл малалла татах та ăнăçлă ĕçлесе пырасса шанса тăрса, эпир Семен Васильевича сывлăх сунса алă тытатпăр.

Н. ВАСЯНКА.

МЫСЛЕЦРАН КИЛЕКЕН ÇЫРУСЕМ

3. Вăрмантан тухас килмест

Колхозниксен пухăвĕ пуласси çинчен пĕлтерчĕç. Эпĕ те унта çитрĕм. Мĕншĕн-ха килте ларас? Ыйтăва халăхпа пĕрле сӳтсе-явни авантарах; пĕри, унтан тепри лайăх сĕнӳсем параççĕ. Вăл сĕнӳсем халăхăн пĕрлĕхлĕ шухăшĕсене пĕлтереççĕ тата вĕсем халăхăн тĕп тĕллевĕ патне пырса тухаççĕ. Манăн колхозниксен пĕр пухăвĕнчен те тăрса юлас килмест, ялан унта хутшăнатăп. Вăл кун партин районри комитетĕнчен килнĕ Семенов доклад туса пачĕ. Вăл «СССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн вăрман хатĕрлевĕнче 1941 çулти 1-мĕш кварталта çуран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность тăвасси çинчен» СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) постановленине кăларни çинчен каларĕ. Питĕ ăнланмалла пулчĕ: вăрман хатĕрлени промышленноçа — фабрикăсемпе заводсен строительствине, шахтăсене кирлĕ, оборонăра паха вырăн йышăнать. Вăрманта ĕçлеме тӳлевлĕ повинность туни пит кăмăла килчĕ. Хăвăртрах вăрмана тухса килсе, вăрман касса хатĕрлеме тата турттарма панă задание тултарас енĕпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлес туртăм хăпарчĕ. Хам тата вăрманта ĕçлеме питĕ юрататăп.

Чăнах, Димитрий Семенович Семенов вăрманта ĕçлеме питĕ юратать. Вăл вăрман хатĕрлевĕн пĕррремĕш квартал планне ăнăçлăн тултарни промышленноçра тата халăх хуçалăхĕнче мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине тарăннăн ăнланса илнĕ. Вăрманта ĕçлеме тӳлевлĕ повинность тăвасси çинчен закон тухсанах, Димитрий Семенович вăрман хатĕрлеме тухса килнĕ. Кунта вăл халь пĕр уйăх ытла пурăнать.

Барака таврăнса апат çинĕ тата чĕлĕмсем чĕртсе янă хыççăн ун тавра лăках çынсем ларса тулаççĕ. Тимлĕн итлеççĕ унăн сăмахĕсене. Паян та çавнашкалах пулчĕ. Вăл вăрманта хăй тата хăйĕн умĕнче ларакан юлташĕсем мĕнле ĕçлесе пыни çинчен калама пуçларĕ.

Вăрмантан тухас килмест. Халăхпа пĕрле ĕçлеме те, пурăнма та лайăх. Тул çутăлса çитнĕ çĕре ĕçлемелли вырăнта пулатпăр. Унта мĕн-мĕн ĕçлемеллине — камăн йывăç касмалла, камăн пăчăкă туртмалла тата мĕнле материалсем: вутă, пĕрене, кряж хатĕрлемелле—палăртатпăр, ăна ушкăнпе пĕрле сӳтсе-яватпăр. Пирĕн хамăртан уйăрнă бригадир пур. Вăл бригадир, Иван Семенов, пĕтĕм ĕçе йĕркелесе, кăтартса пырать. Пĕр-пĕр пысăкрах юман касас пулсан, малтан вăл ӳкекен енчен кансĕрлекен йывăççене касса çул уçатпăр. Унпа пĕрлех вăл юмана касма хамăр валли вырăн хатĕрлетпĕр. Çапла майпа йывăçа эпир ланкма тата ванма памастпăр, хамăр та сиен курмастпăр. Ĕç те ăнăçлă пырать. Ăна хамран илсе калама пултаратăп: Эпĕ кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса пыратăп. Ку мана тата ытларах тăрăшса ĕçлеме хавхалантарать. Колхозра, акă кашни ĕçлеме пултаракан çын пуçне 18 кубла метр вăрман хатĕрлемелле тесе задани пачĕç. Вăл задани мана тивес çукчĕ, çул енчен ватă. Эпĕ ăна пăхса тăмасăр вăрмана хам кăмăлпа килсе, 40 кубламетр вутă хатĕрлерĕм. Государствăна та пулăшать вăл, хама та усă парать: тивĕçлĕ ĕçшĕн государство укçа тӳлет...

Димитрий Семеныч ĕçе тĕплĕ тата пахалăхлă тума тăрăшать. Çавăнпа вăл ĕçрен йĕрĕнекен çынсене туйса илмелле каласа, вĕсене куç умĕнчех питлесе, ĕçе юратма кирли çине кăтартать.

— Эпир нумай чухне алри пуртăна та тытса тăраймастпăр, пăчăкăна туртаймастпăр. Вăл вăй çукран мар, çине тăрса, вăйхал кăларса ĕçлеме ӳркеннинчен килет. Мĕн чухлĕ ĕçлетĕн, çавăн чухлĕ вăй-хал тухса пырать. Тĕрĕс вĕт?

Димитрий Семеныч ачи, Григорий, Хĕрлĕ Çарта пурăнать. Унта вăл тăванĕсем патне Хĕрлĕ Çарти дисциплинăпа вĕренӳ çинчен, тăван çĕршыва çирĕп хурал сыхласа тăни çинчен пĕлтерсе çырусем ярать. Ывăлĕн çырусенчи сăмахĕсем ашшĕ чĕрине ăшшăн кĕрсе вырнаçаççĕ. Ахальтен мар унăн государствăшăн вĕçĕмсĕр хĕрӳллĕн ĕçлес килет.

— Халĕ ĕнтĕ ушкăнпех выртса сывăрăпăр, канăпăр. Ыран çĕнĕ вăйпа, çĕн хастарлăхпа государство заданине тултарма вăрмана тухăпăр.

* * *

Кайран эпир Димитрий Семенычпа уйрăмăн ларса калаçрăмăр. Вăл пирĕнтен çак строкасенче уйрăмах акă мĕн çинчен палăртса хăварма ыйтрĕ: вĕсем пурăнакан передвижной бараксем патĕнче лесучастокран янă Ст. Запяльцев пăчăкăсем хăйраса пурăнать. Вăл хăйранă пăчăкăсем пĕрер сыпăк вутă татма та чăтаймаççĕ, мăкалса каяççĕ. Ку пилоточь хăйĕн ĕçне ытла та çиелтен туса пырать, пĕрер сехет хушшинче 20—30 пăчăкă тарин хăйраса хурать, çакнашкал «хăвăртлăхпа» хăйранă пăчăкăсен пахалăхĕ, паллах, пулмасть, вăл ĕçре кăна кансĕрлет.

— Пăчăкăсене хамăрах хăйрама ăста, анчах хамăр алла подпилкăсем памаççĕ, — терĕ вăл юлашкинчен.

* * *

...Ирхине тул çутăлса килме пуçларĕ. Çынсем бараксенчен тăрса тухрĕç. Элĕк районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозран килнĕ бригада вутă касса хатĕрлеме вăрман ăшне кĕрсе карĕ. Димитрий Семеныч бригадăри ытти çынсенчен малтан ĕç юрри пуçласа ячĕ.

Ив. МОСЕЕВ.

Пĕлтерни

Ыран, мартăн 7-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Пионерсен Двореçĕнче Хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Коммунистла кунĕ—Мартăн 8-мĕш ячĕпе хулари хĕрарăмсен активĕн чаплă пухăвĕ пулать.

КУН ЙĔРКИ:

1. Хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Коммунистла кунĕ—Мартăн 8-мĕш çинчен (докладчик **М. М. Романова** юлташ).
2. Художествăллă пай.

Чĕнӳ билечĕсене ВКП(б) горкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕнче илмелле.

ХУЛА СОВЕЧĔН ИСПОЛКОМĔ.
ВКП(б) ГОРКОМĔ.

Лекци

Паян, мартăн 6-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче **«Ачасене коммунистла воспитани парасси çинчен»** темăпа публичнăй лекци пулать. Лектор — **Бокарев** юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать.

Парткабинет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабсельнорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательстве конторин—0—23.

НТ 2593

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 191. Ф. Б. 58×84 п. л.